К С(Чув)
С 20
33637 чув



РАИСА
САРПИ

# ҪĂЛТĂР
# ҪУМĂРĔ

Национальная библиотека ЧР
4-033637

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

*Халăхăмран çӳлте,*
*Пьедестал çинчи пек,*
*Тăрассăм килмест.*
*Халăхăмпа пĕрле*
*Çĕкленессĕм килет*
*Тасалăх тӳпине,*
*Хĕвеллĕх тĕнчине...*


РАИСА
САРПИ
П.В 91

кф
КС(чув)
С 20

# РАИСА САРПИ

# ҪĂЛТĂР ҪУМĂРĔ



САВАСЕМ

Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
1992

ББК 84 7-5
С 20

ПРОВЕРЕНО
2010

**Сарпи Р. В.**

С 20 Çăлтăр çумăрĕ: Сăвăсем.— Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1992.— 175 с.

Раиса Васильевна Сарпи ячĕ — пирĕн вулакансемшĕн паллă ят. Хăйĕн çĕнĕ кĕнекинче автор паянхи çамрăксен чунне, вĕсен шухăш-кăмăлне сăвăç чĕлхипе сăнарлăн уçса пама тăрăшать. Р. В. Сарпи сăввисем çепĕç туйăмлă, вулакансене вĕсем пурнăçра хастар пулма хистеççĕ.

**ББК 84 7-5**

С $\frac{4702710202—27}{М\ 136(03)—92}$ 26—92

Чувашская
республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. ГОРЬКОГО

ISBN 5-7670-0573-7

33637-чув

© Чăваш кĕнеке издательстви, 1992 ç.

# ТЕЛЕЙ СУНАТӐП



## ТЕЛЕЙ СУНАТĂП

*Петĕр Андреева* ыр сунса

Аттем-аннем, сире телей сунатăп!
Çуратнăшăн, ӳстернĕшĕн — тавах!
Аттем-аннем, эсир ман ик çунатăм...
Ялан асра тăван кил — шур йăва...
Аттем-аннем, сире телей сунатăп!

Сар мăшăрăм! Сана телей сунатăп!
Савса сар мăшăр пулнăшăн — тавах.
Ан тив, кун-çул туллатăр та унатăр —
Сума сăвам таса юратăва.
Сар мăшăрăм, сана телей сунатăп!

Ачам-пăчам, сире телей сунатăп!
Сар ылтăн мар, хĕвел пиллем сире.
Вăрçа-харçа сирĕн ятпа юнатăп,
Мухтатăп сăввăм-юррăмра — мире.
Ачам-пăчам, сире телей сунатăп!

Тăванăмсем, сире телей сунатăп!
Пырайччăр ĕçĕрсем ăнса, кал-кал!
Тăванлăхпа хевтеллĕн эп çунатăп —
Кӳретĕр чĕрене сӳнми вăй-хал.
Тăванăмсем, сире телей сунатăп!

Тус-йышăм, эп сире телей сунатăп!
Туссемсĕр çын — тымарсăр йывăç пек.

Тус-йышăм яш туйралăхăн хунатăр,—
Чĕреçĕм пулĕ тулăх та илпек.
Тус-йышăм, эп сире телей сунатăп.

Чăвашăмсем! Сире телей сунатăп!
Ан сивĕнĕр тăван чĕлхемĕртен.
Мансан, чĕлхесĕр янавар пулатпăр.
Чĕлхе пулсан пĕтместпĕр ĕмĕр те!..
Чăвашăмсем, сире телей сунатăп!..

* * *

Юхать-и юханшыв шăнкăртатса,
Е шăпчăк шăратать-и юррине?..
Асамлă кĕвĕ, çунатсем хушса,
Çӳл тӳпене çĕклет чун-чĕрене.

Юханшыв мар юхать шăнкăртатса,
Çук, шăпчăк шăратмасть шеп юррине.
Чăваш пики юрлать хавхаланса,
Илет тыткăнласа чун-чĕрене...

* * *

... Тăван çĕршывăм, Чăвашстан,
Чунпа та чĕремпе — эп сан.
Тăван çĕршыв — эп сан хĕрӳ,
Сана саватăп эп хĕрӳ!
Шанатăп:
Манăн юрату
Хевтесĕр мар.
Сан çунату
Мана çĕклерĕ тӳпене,
Хăват эс патăн чĕрене.
Тăван çĕршыв — эс ман чунра!
Тăван çĕршыв — эс ман юнра!
Тăван çĕршыв — эс умăмра!
Тăван çĕршыв — эс юррăмра!
Юрлатăп эп сан ятупа,
Сан ятупа тăвап тупа.
Сан ятупа пур халăхра
Тупатăп тус эп.
Туслăхра
Сутмастăп.
Эпĕ — сан хĕрӳ.
Чăваш!
Манра сан вут чĕрӳ!

## ЧĂВАШĂН ЫР ЙĂЛА НУМАЙ

*Юхма Мишшине*

Пит ыр сăмах чăвашăн пур:
«Нихçан та çăлкуçа ан сур!
Хыт хисепле ваттисене,
Сума та су ыттисене...»

Пур йăлана шута хума
Тĕллев лартман эп, тĕв туман.
Шутлас — пӳрне те çитес çук...
Пĕрин пирки халь калаçу.

Чăваш ялне пырас пулсан,
Пĕрремĕш шухăш пулĕ сан:
«Ҫу ял, чăнах та, вăрманта...
Çук! Çук! Вăрманĕ хăй ялта...»

Мĕн ĕлĕкрен, мĕн авалтан,
Çын хушăнсассăн кил-йышра,
Хавхаланса, таса чунтан
Чăваш лартать ик-виç йăмра:
«Йăмра ӳсет, çынни ӳсет,
Хĕвел çути пурне çитет...»

Паян та вăл лартать садне
Шур хурăн хĕр пĕрчи ятне.
«Ӳс хурăн пек яштак, хитре,
Хĕвел вылятăр сăн-питре...»

Сар ывăл ячĕпе юман
Лартать те çапларах юмлать:
«Юман пек çирĕп ӳс, патвар,
Ятна эс нихăçан ан яр...»

Хĕвел шевлийĕ айĕнче
Йышлантăр хурăн та юман.
Мăнаçлăн ирĕк çĕр çинче
Кашлатăр, ӳстĕр çĕн вăрман!..

* * *

Пĕччен, хир урлă, тӳремрен
Утатăп суккăр тĕттĕмре.
Кил-çуртсăр çил, тарса темрен,
Тупасшăн хӳтлĕх хĕвĕмре.

Çĕр çумĕпе мăн пĕлĕтсем
Упаленеççĕ шур упан.
Хăраççĕ каясран çĕтсе,
Тӳпенелле кăшт хăпарсан...

Ман шиклĕх çук. Ак, умăмра
Çĕн çăлтăр ушкăнĕ — Шăхаль.
Хушать хăват ман чунăмра,
Çул кăтартса, çуралнă ял.

Ман ушкăн çăлтăрăм — Шăхаль,—
Ан сӳн нихçан! Эс çун ялан!
Сана çынсем çутман ахаль —
Эс çул кăтарт, çĕкле хала...

* * *

Хёр куççулĕ пекех типрĕ сывлăм...
Киленсе эп сывлап тăрă сывлăш.
Çавал çийĕн хĕвел,— вутлă ункă!
Вăранать ыйхăран симĕс Рункă.

Автан хорĕ янрать кассем çийĕн,
Кĕтӳпе тăп тулать ял чĕрçийĕ.
Уçăлать-хупăнать хапха-алăк,
Уй-хире çул тытать ĕçчен халăх.

Çурт-йĕрсем йăлтăркка чӳречеллĕ,
Кермен евĕр лараççĕ пит меллĕн.
Усăнать панулми карта урлă,—
Пурăнать кунти халăх пит муллă.

Ӳстермен эс мана, симĕс Рункă,
Пурпĕрех хаклă эс манăн чуншăн,—
Юррăма-сăввăма чыслăн кĕрĕн,—
Уйрăлми пайĕ эс Чăваш çĕрĕн.

## ТĂВАН КИЛ

Ĕмĕтсем сана, канма памасăр,
Çул тытма чĕнеççĕ инçете.
Кил енне, тен, çаврăнса пăхмасăр
Уттаран... Таçта та эс çитен.

Савнă килшĕн пурпĕр тунсăхлатăн —
Пурнăçу пырсассăн та ăнса.
Тĕлĕкре килех эс таврăнатăн,
Уйăх пек, хĕвел пек çаврăнса.

## ÇУРАКИ

*Лена Кузнецовăна,*
«Рассвет» колхоз трактористкине

— Çывăрсам, тин килнĕ кăвак çутă,—
Ҫашкăр мар, ĕç тармĕ вăрмана...
— Ир тăран çерçи çеç пулать тутă,—
Хăв калаттăн-çке, аннем, мана.

Юрататăп эп шевлеллĕ шуçăм
Тӳпене автограф çырнине.
Кăмăл савăк, чунăма пит уçă,
Эп ĕçре туймастăп ырнине.

Уйăм-хирĕм сарлака та аслă,
Маншăн çук унран хакли, пахи.
Тăван хир пин тĕслĕ те пин саслă,
Пит хитре симфони — çураки...

Акана эп хаваспа тухатăп —
Пултăр пайăм халăх ĕçĕнче.
Вăй илсе тăрать хăватлă Атăл
Пĕчĕкçеççĕ юханшывсенчен...

Трактор «кӳлнĕ» Пăла хĕрĕ Лена
Йăл çиçсеваскать уя-хире.
Тухăç мăкăнь евĕр кĕренленнĕ,
Автан уççăн саламлать ире.

Тăпри тулăх, вăрлăх ытлă-çитлĕ.
Ĕç кĕвви инçе-инçе каять.
Ак хĕвел тухать. Хĕп-хĕрлĕ питлĕ,
Вăтанать-тăр юлнăшăн кая.

Çĕкленет те тӳпене васкавлăн
Йăл кулса пăхать вăл çĕр çине.
Тырă акнă уй-хире кал-каллăн
Ывçипе сапать çут шевлине.

* * *

Çын вăл — çынах. Мĕскер сăмахласси?..
Ырри те, усалли те пур çынра.
Эп саншăн кам, мĕнле çын пуласси —
Йăлтах, тĕпрен, юлташ, килет санран.

Курма пĕлсен, эс курăн ыррине,
Куран усаллине, курас тесен...

Çĕн шурăмпуç килет те ир енне,—
Шап-шурă тĕс çĕнет хура тĕсе.

* * *

*Альбина* Йăмăкăма

Ирсерен çӳретĕн вăрманта,
Сывлăм сыпнă сар чечек татса.
Сарă кун илемĕ сăнунта,
Сывлăм пĕрчи пек эс тап-таса.

Çепĕç сассупа юрла-юрла
Тăхăнатăн пуçкăшăль çыхса,
Ырласа итлет сана Хырла:
«Шăхаль хĕрĕ иртрĕ,— тет,— юхса...»

Çăмăллăн вĕçсе-чупса пырса,
Шурă-шурă аллуна сарса,
Ыталатăн çамрăк хурăна.
Хурăн евĕр хăв та курăнан.

Тĕмсĕлсе эс инçете пăхан —
Шухăшра сан Лисс та Зурбаган.
Ĕненетĕн Гринăн тĕнчине,—
Çутататăн Ĕмĕт ĕнчине...

Ача мар халь, хĕрлĕх — умăнта,
Вунултта эс пусрăн паянтан.
Чунунта — çут туйăмсен вăйĕи,
Ан пĕттĕр çунса вĕсен хăйĕи.

Эп пăхап-пăхап та сан çине
Саншăн кăмăла йӳле ярап.
Кĕрен парăс карнă шур карап
Ишсе килтĕрччĕ пĕр ирхине...

## ЫРĂ СĂМАХ

Ыр сăмах калама ан ӳркенĕр.
Ыр сăмах — ырă вăрлăх пекех.
Тулăх чун-чĕрене вăл ӳкет-тĕк —
Ырă тухĕ шăтса кĕпĕрех.

Ыр сăмах калама ан ӳркенĕр —
Вăл лексен типсе хăрнă чуна —
Тĕппипех пулмасан та (ĕненĕр!) —
Пăлхантарĕ кăштах сив юна.

Ыр сăмах калама ан ӳркенĕр —
Пулмасан та хăш чух ун усси —
Пулас çуккă сиен. Ан хĕрхенĕр!—
Ыр сăмах чылай чух — чун уççи.

Ыр сăмах калама ан ӳркенĕр!

## ТИВĔÇ

«Эс вăрçăра пулман,
Ал-урасăр юлман,
Курман ун çулăмне,
Çунман ун вутĕнче.
Сан тивĕç çук çырма
Вăрçă-харçă çинчен...» —
Тейĕç хăш-пĕрисем
Тивĕç пур ман çырма.
Тивĕç çук — чĕнмесĕр тăма.
Эп пулман вăрçăра...
Эппин, мĕншĕн чунра канăç çук?
Çăп-çăра
Хура тĕтĕм памасть
Сывлама —
Тĕлĕксем чыхăнаççĕ унпа,
Çăвăнаççĕ чĕп-чĕрĕ юнпа.
Ахлатса йăванать, ав, салтак,—
(Асанне кĕтет ăна ялта),
Ку — вăл ман асатте...
Акă тепĕр салтак
Чупать малалла, йăлтах кайнă халтан.
Юнашар, ак, снаряд шартлатать...
«Ах, ан вил, аттеçĕм, ат-те!!!» —
Вăранатăп сивчир тытнă пек,
Йӳç тарпа тăварланнă кĕпе.
Çывраймастăп вара мĕн ирччен,
Ват аттем ыйхăран тăриччен.
Кăштăр-кăштăр çӳрет туяпа,
Пурпĕрех вăл утать уялла...
«Эс пулман вăрçăра...»
Пулнă эп вăрçăра!
Ман аттем ун чухне çирĕмре —
Тен, курман та мана ĕмĕтре...
Шăхальтен Берлина çитнĕ эп.

Курнă — ун куçĕпе,
Илтнĕ — ун хăлхипе,
Туйнă — ун ӳчĕпе,..
Вăрçă йăлт вăл манра,
Ман чунра, ман юнра.
Çавăнпа каçсерен
Вилнисен сассисем
Йынăшаççĕ, калаççĕ, сисеп:
Тивĕç пур сан çырма,
Тивĕç çук — чĕнмесĕр тăма!

33637 - чув
Чувашская
республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. ГОРЬКОГО

## МАНĂН ĂРУ

Пиччемĕрсем, ман ăрăва ан вăрçăр,
Çăмăлттайсем тесе пире ан хăртăр.
Çĕн модăшăн ан ятлăр кăлăхах,
Таса чунпа курсамăр чăнлăха:

Йӳç шурлăх тăрăх харсăррăн утатпăр —
Çĕн хуласем сĕм тайгара лартатпăр.
Акса пухатпăр тырă пушхирте —
Пуласлăхĕ çĕршывăн — пирĕнте.

Пиччемĕрсем, ман ăрăва ан вăрçăр...
Сире нумай туллана, хуçнă вăрçă,
Эсир пулман хаяр тăшман кулли —
Орден-медаль кăкăрăрсем тулли.

Эпир пуласшăн сирĕн пек сумра!
Хастар пуласшăн çут малашлăхра.
Ан вăрçăр, пиччесем, ман ăрăва,
Ман ăрăвăн чĕри те шĕл-кăвар.

Куллен тăрать вăл аслă хуралта,
Каппайланма памасăр çич юта.
Кирлех пулсан — пулатпăр гранит-палăк...
Телей юрри юрлатăр тăван халăх.

## АНЮК АППА

Васкаса сăра ăсса кĕретĕн,
Хĕлĕх алапа ăна сĕретĕн.
Юр-варне лартан сĕтел çине.
— Ĕç-ха, çи,— теен çине-çинех.

Сарă мăйăр тирĕкпех сĕнетĕн...
— Мĕн пирки каплах вĕтеленетĕн,
Туй-çуй килнĕнех хӳрӳ вĕçне?..
Вĕçлеймерĕн пусăннă ĕçне.

Ах, Анюк аппа, ан хыпкаланччĕ,
Юнашар ларса, кăштах кансамччĕ.
Салтса яр сăмах хутаççине,
Қаласам мана ял хыпарне.

Икĕ çул çитет тĕл пулманни,—
Эп калаçнă май сана сăнатăп,
Пĕркеленчĕк сăн-питӳ, куратăп.
Путса кĕнĕ санăн куç ани.

«Çамрăк-ха, ыр кур кăштах»,— темерĕ,
Хăв шăпу сана пит шеллемерĕ.
Мăшăру пуç хучĕ вăрçăра.
Вăхăт пулчĕ çулăмлă, кăра.

Вутă çуртăн ар пек, утă çултăн,—
Виçĕ пĕчĕк ачапа эс юлтăн,—
Йывăрпа ӳстертĕн вĕсене,
Тăчĕç çирĕппĕн ура çине.

Çăлтăр куçлă икĕ сарă ывăл
Чикĕре тăрать. Илемлĕ, сывă.
Йăрăс пӳллĕ хĕхĕм сар хĕрне
Асатан ирпе колхоз хирне...

...Аллуна чӗрҫӳ ҫине хуратӑн,
Саппунпа вӑтанчӑклӑн хуплатӑн.
Ан пытар хытанкӑ аллуна,
Манӑн чуптӑвас килет ӑна.

Ҫакӑн пек алсем пиншерӗн пулнӑ.
Ҫавӑнпа ҫӗршывӑм сывӑ юлнӑ.
...Тӗппипех ӗҫетӗп сӑруна,
Мухтаса сан ылтӑн аллуна.

* * *

Нишлӗ чуншӑн пурнӑҫ — ӑшӑх кӳлӗ.
Путсӗрсемшӗн пурнӑҫ — лачака.
Ӗмӗт, канӑҫ ыйхипе ан пӳлӗн,
Йывӑрлӑхсенчен чака-чака.

Кӗрешме те ҫӗнтерме ҫуралнӑ
Эпир аслӑ, ҫутӑ тӗнчере.
Пирӗн пурнӑҫ — тинӗс. Тӗпсӗр, анлӑ!
Тупсӑмне тупма чӗнет пире.

Уртӑр тинӗс, астӑр ҫурҫӗр ҫилӗ...
Хӑратса пӑраймӗҫ чӑн ҫултан.
Пирӗнте тӑван ҫӗршывӑн пилӗ —
Аллуна кӳр, шанчӑклӑ юлташ.

## ХĔРАРĂМ

Сике-сике ташлать таса çăлкуç,
Сулхăнĕнче ман уçăлать пит-куç.
Шывне ĕçсен, чуна вăй-хал кĕрет.
Хаваслăрах тапма пуçлать чĕре.
Çак çăлкуç пек сипетлĕ эс, хĕрарăм.

Хĕвел ачашшăн хăйĕн шевлине
Тăкать çурхи вăраннă çĕр çине.
Кашни чĕрчун, кашни ӳсен-тăран
Хĕвел патне кармашăнать ялан.
Хĕвел пек ăшă пиллĕ эс, хĕрарăм.

Пĕтсессĕн сывлăш — пĕтĕ çут тĕнче.
Йăл пурăнăç та пулмĕ çĕр çинче.
Çак шухăша илсе ăса, ăша,
Тасан сыхласшăн эпĕр сывлăша.
Сывлăш пекех пит кирлĕ эс, хĕрарăм.

Хĕрарăм — чун савни, ыр асанне,
Юратнă мăшăр, ытарми анне.
Хĕрарăм, эсĕ — çулăмлă поэзи,
Чуна çĕклентерен çĕн юрă эсĕ.
Пĕр сăмахпа, пурнăç тĕвви — хĕрарăм!

## ПУРĂНĂÇ

Эп пурăнăç — сенкер сăпка тесе,
Йăр ярăнса çеç сиктерет тесе,
Эп пурăнăç — чечек çыххи тесе,
Мăн улăхра çеçкеленет тесе.
Эп пурăнăç — таса çăлкуç тесе,
Тăранайми ăна ĕçеп тесе,
Эп пурăнăç — тăван анне тесе,
Ачашласа пуçран шăлать тесе.
Ах, çук иккен!
Пурăнăç — çавраçил,
Силлет, туллать, пăхмасть, сан пур-и пил...
Хăш чух вăл — пурăнăç — амаçури,
Чăт, кăтартать сана шурри-хури.
Чăн пурăнăç — çурхи шывсен юххи,
Инкексемпе пур ырлăхсен пуххи.
Эй, пурăнăç!
Лартах танатуна:
Кĕрешĕве чĕнетĕп эп сана!

## ЫРĂПА УСАЛ

* * *

Эп утас çул çине
шăтăк чавнă
Усал.
Хăрамастăп.
Утатăп малаллах.
Шанатăп:
Анса кайсан —
ал парĕ
Ырă.

* * *

Усаллăх —
шĕкĕ чунлă,
вĕчĕрхенӳллĕ.
Вăл Ырра кĕвĕçет —
çынсем
Ырра
юратнăшăн.

* * *

Усаллăх —
чапшăн çунан ăçтиçук —
пуласшăн вилĕмсĕр.
Анчах
ун ĕмĕрĕ
кĕске.

Сисет вăл —
часах ун
выртмалла
тупăка.
Çавăнпа
урнă йытă пек
çӳрет вăл чупса
çĕр пичĕ çийĕн,
унта та кунта
вараласа.

* * *

Ан тив,
Усаллăх
хутăр ура,
ятăр тĕртсе
тĕпсĕр шырлана.
Çапах
мĕскĕнленмĕп.
Кĕрешӳре
çирĕпленĕп.

* * *

Усаллăх
чăрмаласа
таткаласассăн та чĕреме —
чĕрен чи пĕчĕк татăкĕ те
çынсене Ырă сунма
пăрахмĕ.

* * *

Тӑванлӑх — ҫынлӑх,
пӗрне-пӗри
акам * тӑвар,
туслашар.
Пӗрле
Усаллӑха ҫӗнтерме
ҫӑмӑлрах пулӗ
пире.

* Акам — тус-тантӑш.

## ĂНТĂЛУ КĔВВИ

Атăл тăрăх анать пысăк сулă.
Сулăçи ал сулать: — Ил,— тет,— пулă!
Чапак пулă йăлттам. Çуллă-çуллă,
Пухнă, тен, вăл çуне кĕрлĕ-çуллă.

Шутламан вăл нихçан пулма вуплă,
Инçетри шывсемпе ялан супнă,—
Йăлăхтарнă ăна лăпкă кӳлĕ...
Виçĕ чалăш çеç пулнă ун çулĕ —
Кӳлĕрен мăн шыва тухсанах
Атмана вăл çакланнă вăртах...

Йăлăхтарчĕ мана лăпкă пӳлĕм,
Çилçунат утăма тытрăм кӳлтĕм.
Эп тухатăп çула. Шăнмĕ юнăм.
Çĕнĕ туйăмшăн хыпрĕ шух чунăм...

* * *

*А. Ф. Сергеевăпа Г. Я. Лакирович*
тухтăрсене халаллатăп

Хĕвел тухать!.. Тухать йăл-йăл кулса,
Шевлисемпе çава пекех сулса,
Қаç ĕнтрĕкне, ун хуп-хура сĕмне
Паккусласа вăрать варсем тĕпне.

Хĕвел тухать!.. Савса çут тĕнчене,
Хура та нĕрсĕр сив пĕлĕтсене
Сирет пуç çиййĕнчен айккинелле,
Тӳпе çĕрпе пĕрлешнĕ тĕлелле.

Хĕвел тухать!.. Чĕтренчĕк чечеке
Хăратмĕ ĕнтĕ сĕм-çĕрле текех.
Пур йывăç-курăк, çĕр çинчи чĕрчун
Хавхаланать: умра — çап-çутă кун!..

Сиплевçĕ! Санăн ырă кăмăлу,
Ырми-канми хастар, патвар аллу
Хĕвел шевли пек туйăнать мана...
Çĕре çити тайма пуçах сана!

## ЫЛТĂН АЛĂ

*А. Н. Волков* хирурга

Ĕмĕр-ĕмĕр сывă пултăр пурнăç!
Пурăнасчĕ. Пурăнас килет!!!
Пĕр кĕтмен-туман çĕртен-çке, урнăн,
Пурнăçа илме инкек килет.

Сăнсăр карчăк шăл йĕрет те йӳççĕн
Çавипе сулать хăлаçланса.
Путсĕрскер, пулаймĕ çĕнтерӳçĕ,
Ылтăн алă скальпельне тытсан...

(Ылтăн алăсем тет ăслă халăх
Харсăр та ăста этемсене...)
Кĕрешет хăюллăн ылтăн алă,
Рыцарь евĕр, вилĕме çĕнет.

Ылтăн ал çинчен юрлать чун-юрăç.
Ылтăн алă пурăнăç пиллет.
Сывă пултăр ĕмĕр-ĕмĕр пурăнăç!
Пурăнасчĕ. Пурăнас килет!!!

## ШУЛАНКĂШ *

**Мари халăх поэтне**
***Семен Вишневские***

Мăн Атăл хĕрринех чупса эс аннă,
Сирсе сип-симĕс хырлăх ытамне.
Шуланкăшăм, хаваслăн та вăтаннăн
Эс йышăнан хумсен ăш саламне.

Шур пăрахут инçе çулра ырсассăн,
Эс ăсататăн вăй-хăват парса.
Шуланкăшăм, хăна-тавраш пырсассăн,
Кĕтсе илетĕн ытамна сарса.

Чăвашĕ, вырăсĕ, тутарĕ, мари
Кунта пурнаççĕ çывăх тăванла.
Шуланкăшăм, утатăн эс хастаррăн
Онарпа Улăп евĕр малалла.

Шуланкăшăм, сана епле-ха манăн?
Ялан килетĕн эсĕ асăма.
Шуланкăшăм, асамлăх пур-тăр санăн:
Эс тыткăнларăн манăн чунăма.

---

Шуланкăш * — Звенигово шывĕпе хулин авалхи ячĕ.

## ШЫВ

Ҫӗр юнӗ — эп. Вӑй-хал парса
Тӑратӑп сан садна.
Ҫӑлкуҫ пулса, ҫӗр шӑтарса
Тухатӑп сан патна.

Пӗлетӗп эп: эп пулмасан,
Пурнаймӑн савӑнса.
Пӗлетӗп эп: эп пулмасан,
Ӳкейӗн авӑнса...

Эп — шыв. Эп — санӑн пурнӑҫу.
Эп пулмасан, эс ҫук.
Этем! Эп — сан. Сыхла! Нихҫан
Ан сур мана куҫран...

## СИВЧИР

Шăрăх.
Çуркаланнă тутана
Чĕлхепе çуласа йĕпететĕп.
Шăрăх.
Хăйăр кĕрчĕ хĕвет
Витĕр çунтаракан
Типĕ çил.
Хăйăр çиет куçа.
Шăрăх.
Аран-аран
Мĕкĕлтетет ашакăм.
«Қахал вырьăх!» —
Шутлатăп тарăхса.
Ăçта каятăп эп?
Мĕн-ма?
Пĕлместĕп.
Пĕлетĕп çакна çеç:
Çăл патне çитме — инçе.
Сулхăн кӳрекен каçчен —
Чылай:
Хĕвел
Саксаул туратти çинче
Тĕркменле ура хуçса ларать...
Шăрăх.
— Пĕр тумлам шывччĕ!—
Пăшăлтататăп çуннă тутам.
Асамçă пек,
Таçтан,
Хăйăр айĕнчен
Тухса тăратăн эс
Ман ума.
Қулса пăхатăн
Ман çине.
Аллунта — арбуз.

Тем пысăкăш,
Йăрăм-йăрăмлă
Çавра арбуз.
Хуçатăн ăна
Çăмăллăн
Çурмалла.
Сĕтеклĕскере
Сĕнетĕн мана.
Илес тесе
Антăлатăп сан патна —
Вăранса каятăп...
Аннем
Çунса тăракан çамкам çине
Йĕпе алшăлли хунă...

* * *

*Рафик Хисметова*
тата унăн мăшăрне — *Настьăна*

Улма-çырла ларать сĕтел çинче —
Симпыл кăпăкланать алтăрсенче,
Йăсăрланать пирус çинçен-çинçен...
Шухăшсемпе эпир инçе-инçе...

Саватăп çакăн евĕр каççене,
Ирччен хупмасăр сĕлкĕш куççене
Итлетĕп тĕлĕнтермĕш туссене.
Килĕштеретĕп эпĕ вĕсене:

Пĕлеççĕ пит хавассăн пурăнма,
Пит ăслăн тăрăшмаççĕ курăнма...
Васкаççĕ ăнтăлса хĕвел патне,
Çĕр çиййĕнчи чи çӳллĕ ту çине,

Çураççĕ хумсене пăрахутпа,
Çеçенхирте çӳреççĕ çил-утпа...
Чыхмаççĕ енчĕке укçа тĕрки.
Вĕсемшĕн хаклă сăвăсен йĕрки.

Вулатăп савăнса, хавхаланса,
Чун-чĕрем пе çут ĕмĕте шанса...
Килсемĕр, тĕлĕнтермĕш тусăмсем!
Пĕрле килейччĕр çутă шуçăмсем...

* * *

Юлташăм калать: «Тĕлĕкре
Ялан вĕçетĕп,— тет,—
Ķайăк пек пĕлĕтре
Хама туятăп»,— тет.
Эп тĕлĕкре вĕçместĕп.
Эп тĕлĕкре ишетĕп.
Сив хум айне путатăп,
Шыв тĕпĕпе утатăп.
Сывлăшсăр пăвăнатăп,
Сывлăшсăр тăвăнатăп.
Мĕнпур хала пухатăп,
Пĕрех ишсе тухатăп...
...Юлташăмпа шӳтлетĕп,
Эс кайăкран пулнă тетĕп.
Эп хам вара пулнă пулĕ
Пĕр-пĕр дельфин е пулă?..

Ман пур пĕр пĕлĕш, паллакан:
«Эп тĕлĕкре шăватăп,— тет,— ялан...»

## ÇĔЛЕН

Сип-симĕс çерем çинче
Выртать
Пиçиххи,
Хураскер,
Йăлтăрккаскер,
Хĕвел çутинче
Çиçсе,
Куçа илĕртсе.

— Ах, епле илемлĕскер!..
Кам çухатнă-ши ăна?..
Илес тесе
Çывхартăм ун патне...
Ах, турăçăм!..
Пулчĕ тăчĕ
Пиçиххи —
Çĕлен...

Çивĕч сăннипе
Сăхрĕ илчĕ
Аллăмран...
Унтан
Курнăçланса,
Хуçкаланса
Шурĕ
Айккинелле...

Сип-симĕс çерем çинче
Каллех
Выртать вăл,
Пиçиххи пекскер,
Хураскер,
Хĕвел çутинче
Çиçсе,
Куçа илĕртсе,
Тепри пырасса
Кĕтсе...

## ШЁКЁ

Шěкě
пăхма
чěрне хури пек кăна,
çапах
вăл
йывăçшăн
тăвăлран хăрушă.
Пăра пек
кěрет шăтарса
ун ӳтне.
Пěчěккěн кăшласах
татать
сěткен çулěсене —
юн тымарěсене.
Аркатать
йывăçăн варрине —
чěрине.
Вара
пěр-пěр илемлě ир
лаплатать çěре
йывăç,
хăрнăскер...

...Кěвěçěве
ахальтен
танлаштараççě-и
шěкěпе?..

## ЮР ÇĂВАТЬ

*Туркменистанри тусăмсене*

Юр çăвать...
Шап-шурă, кăпăшка, чĕп-чĕрĕ юр.
Çерçи пуçĕ пек чăмаккасем
татти-сыпписĕр тăкăнаççĕ
пĕлĕт миххинчен
çĕр çине.
Тавралăх шап-шурă.
Шур тум уртнă çĕрĕм-шывăм,
Чăвашстанăм,
венчете тăнă хĕр пек
чипер.
Анчах та темшĕн
паян
ытла та хытă тунсăхларăм эп,
сансăр,
янкăр куçлă,
хĕвел питлĕ
Туркменистан!
Шур юр чăмаккисем
çĕр мамăкĕ
евĕрех
туйăннăран-ши?
Çĕн юр шăрши
арбуз шăршине
аса илтернĕрен-ши?
Пуç мимин
çӳпçинчен
асăм
васкаса кăларать
чăрсăр куçăмсем çапса илнĕ
сăнӳкерчĕксене,
вĕсенче эсир,

пушхирте чечекленекен садсем
чĕртнĕскерсем,
асамат тĕрриллĕ кавирсемпе
тĕнчене тĕлĕнтерекенсем,
ман пекех тĕксĕм ӳтлĕ,
хăмăр куçлă,
хура çӳçлĕ
туркмен çыннисем —
аппамсемпе йăмăксем,
шăллăмсемпе пиччемсем.
Тахçанах куçăм ĕмĕтленнĕччĕ
сире курма,
тахçанах хăлхам
тунсăхлатчĕ
сирĕн сасса илтме,
тахçанах чĕлхем каласшăнччĕ
сире:
— Салам, тăвансем! —
тесе.
Чăнах,
телейлĕ çăлтăр айĕнче
çуралнă эпĕ,
шуçăм пек хĕрлĕ,
пилĕк юплĕ
çăлтăр айĕнче
çуралнă.
Çавăнпа пурнăçланаççĕ те ĕнтĕ
ĕмĕтленнĕ ĕмĕтĕмсем.
Тĕл пултăмăр сирĕнпе,
калаçрăмăр курнăçса,
чунтан,
ăнланса
пĕр-пĕрне.
Пит хăвăрт иртрĕç
çав кунсем,
Туркменистан!

Юмах тĕнчи пек туйăнатăн эс мана,
Туркменистан!
Сан ăшă пиллĕ хĕвелӳн çут шевлисем
кĕрсе вырнаçрĕç чĕреме,
чуптурĕç питĕмрен...
Хаваслă куллуна
эп илсе килтĕм хампала —
хĕлле те сивĕ мар мана халь
çавăнпа
шăн Атăл хĕрринче!
Юр çăвать...
Шур юр чăмаккине
тытатăп тутампа —
сĕтеклĕ, тутлă арбуза
тутаннăн туйăнать.
Юр çăвать...
Шап-шурă, кăпăшка, чĕп-чĕрĕ юр.
Анчах та нихăçан та ун чаршавĕ
çитереймĕ вăй
хупăрлама
сан çутă, ăшă сăнарна,
Туркменистанăм,
Туркменистан!

* * *

Балкон çинче эп, çиччĕмĕш хутра.
Чарльстон ташлать йĕпсе ман алăра.
Тăпăлтатса сикет чĕре ютра —
Çурса тухасшăн тейĕн кăкăра.

Шухăшăмсен çăмхи чупать инçе:
Хĕвеллĕ Шупашкар куç умĕнче.
Эп ĕнтĕ анлă Атăл хĕрринче,
Шевле вылять сенкер хумсем çинче.

Чупса çӳретĕп анлă улăхра.
Выртса ĕçетĕп шыв çут çăлкуçран...
Асаилӳ чуна капланнăран
Сăрхăнайса тухать куççуль куçран.

Эп уçманни тăван çурт алăкне
Нумай та мар, ик эрне çеç иртет.
Чĕре сурать. Тăван кĕтес хакне
Туйса эп илтĕм, туйрăм ют çĕрте.

*Дрезден*

* * *

Вĕлтĕртетсе ташлать шур юр...
Юр ташшинче салхулăх пур.
Ҫăвак сухаллă Ҫивĕ çул
Вĕççĕрлĕхе кĕç тытĕ çул.

Ялан салху сывпуллашу —
Макăрашу, ыталашу...
Пулмасть-тĕк хурлă уйрăлу —
Ҫилмест хавaслă тĕлпулу.

Ҫаях, Ҫив çул, тап-такăр çул!
Анчах ан макăр, савăн, кул!
Ӳпкелеместĕп эп сана...
Нумай пăлхатрăн эс мана...

Савăнăçна та хĕрхенмерĕн,
Ĕмĕтĕме çӳле çĕклерĕн...
Ҫаях, Ҫив çул, каях, сыв пул!
Самант — ак çитĕ Ҫĕнĕ çул.

...Шур Шупашкар хыçа юлать,
Ҫĕтсе илме Ҫĕнĕ çула,—
Вĕçтертĕрех-и çил-тăман,—
Ҫаятăп эпĕ Йăлăма...

Мĕскер пиллет Ҫĕн çул мана?..
Тăрсассăн куçа-куç унпа,
Эп тĕмсĕлĕп ăна чунпа:
Ҫук, кирлĕ мар мана сив мул.

Мана ан пар эс çăмăл çул.
Ан парччĕ уссăр тĕрмешӳ,
Ҫăштах парсамччĕ ăнăçу,
Тата... чи çивĕч кĕрешӳ.

Эс тăнăçлăх кӳр тĕнчере,
Хĕвел ялтратăр тӳпере!
Вĕлтĕртетсе ташлать шур юр,
Юр ташшинче хаваслăх пур!

* * *

«Чулпа перене çăкăрпа пер»,—
тетĕр эсĕр, ватăсем!
Эй, ватăсем!
Сирĕн умăрта пуçăма таятăп.
Эй, ватăсем!
Сирĕн ăсăра ăшăма илетĕп.
Чулпа перене —
чулпах перес килет...
Çапах та...
Чулпа перене —
Перем
Чĕремпе!..

* * *

Ăçта, ăçта çав савăк хĕрача?
Пурне шанан, айван çав хĕрача?
Çӳретчĕ пурăнăç вăрманĕнче,
Телей çиçсе тăратчĕ куçĕнче...

Аташрĕ-ши вăрман чăтлăхĕнче?
Çухалчĕ-ши упа ытамĕнче?..
Ау! Ау! Янрарĕ сассăм ман,
Ау! Ау! Ăхрăм ярать вăрман.

Ак тухрĕ, тухрĕ вăрмантан пĕри.
Çав савăк хĕрача халь çитĕннĕ хĕр-и?..
Ак çитрĕ — умăмра пĕр карчамас,
Сивлек ун куçĕ нимĕне шанмасть.

* * *

Тăвас тенине — тăваймарăм...
Пулас тенине — пулаймарăм...
Пурнăç иртет черетре.
Пушăлăх ӳсет чĕрере...

Çав пушăлăха-хăвăла кайăк-шанчăк,
Çук, иленмест...
Тунсăх-анчăк
Унта халь йăва çавăрать...
Нăй-нăй сассипе чун хăрать...

Нăйлать тунсăх-анчăк, улать.
Пурăнăç иртет, кун юлать...
Эп тăвассине — кам тăвать?..
Эп пулассине — кам пулать?..

## ВĂРМАН, ВĂРМАН...

Ҫаллех пурнатăп пĕр-пĕчченлĕхре...
Хуплантăм та вăрман чаршавĕпе,
Тарса мĕскĕнлĕхрен те нишлĕхрен,
Чуна сиплетĕп симĕс шавĕпе.
Вăрман, вăрман, асамçă тусăм ман!

Хуратăп хамăн хурлă пуçăма
Ҫăп-çăпăшка мăк минтерсем çине.
Хуллен хупатăп ырнă куçăма,
Итлетĕп сарă хырăн юррине.
Вăрман, вăрман, асамçă тусăм ман!

Хĕп-хĕрлĕ çĕлĕклĕ пĕр пĕчĕкçĕ старик
Шăтса тухать те манăн умăма
Ура хуçса ташла пуçлать,
Шик-шик! —
Шăхăркалать, уçса кăмăлăма.
Вăрман, вăрман, асамçă тусăм ман!

Ҫаллех, ак, чĕрĕлет — хевтеллĕ!—куç.
Ҫаллех чĕреçĕм — шăнкăрти çăлкуç,—
Шевлеллĕ тумламсем ан кайтăрччĕç сая —
Часрах, часрах çынсем патне каям!
Вăрман, вăрман, асамçă тусăм ман!

Савӑн, Раис, ҫынсене
инкек кӳрекенсем эпир мар...

*Л. Федорова* поэтпа калаҫнинчен

Савӑнар,
Ҫынсене инкек кӳрекенсем
Эпир мар.

Савӑнар,
Чӗремӗрсенче типсе ларман-ха
Чӗрӗ тымар.

Савӑнар,
Ҫут тӗнчене хӗмлентерет-тасатать
Пирӗн кӑвар.

Савӑнар...
Авӑнсан та, ҫынсене ыр кӑтартса
Пурӑнар...

* * *

> Çитетпĕр хĕрĕхе, иртетпĕр хĕрĕхрен...
>
> *Георгий Краснов*

Çилçунатсем-çулсем вĕçеççĕ ĕрĕхсе...
Çитетĕп хĕрĕхе, иртетĕп хĕрĕхрен...
Шăпа тӳпи тăмасть пыл пĕрĕхсе:
Хăтăлаймастăп чунсăр йĕрĕхрен...

Çак чунсăр йĕрĕх — çак тискер хăват
Ума-хыçа усал-тĕсел хăвать:
Чун çунатне сарма памасть — авать,
Чĕрем вăйне сăхса илсе сăвать...
Юхан-çăпан, хăр-тунсăх-куляну
Утăмсерен тăкать, памасть кану.
Пурнăçăмра курмарăм ĕреххет...
Мĕнпе юрам-ши путсĕр йĕрĕхе?

Сар çуллă нимĕр сĕнĕттĕм ăна —
Тен, тулĕ кăмăлĕ, пулсан хăна.
Сар çăвĕ çук-çке пушă лавккара,
Çук çăнăх та, лавкка сентри çара...

Телей ыйтаймăп эп укçапала —
Укçи-тенки кĕрсех тăмасть алла.
Ман пурлăхăм — куççуллĕ чун юрри.
Юрра тăваймăп йĕрĕхĕн хурри.
Юрас тесе тăрлавсăр йĕрĕхе,
Ачамсене параймăп чӳклĕхе...
...Усал çула пӳлсен те, пурпĕрех
Çитетĕп хĕрĕхе, иртетĕп хĕрĕхрен...

* * *

Хуллен
усăлать чаршав...
Шăпланать залри шăв-шав...
Артист, сан вăхăту!
Пуçла —
Арăмла тухату...
Артист, эс халĕ —
Сцена çинчи турă.
Эппин, турă пек, тӳрĕ пурăн.
Сана эпир ĕненсе пуççапатпăр,
Чунпа, чĕремпе тасалатпăр.
Ĕненĕвĕ ан ӳкер çĕре —
Санра çăлăну шырать пиншер чĕре.
Манса пурнăç тĕркĕшĕвне,
Ырăпа усал кĕрешĕвне
Арбитрсем пек сăнатпăр,
Сан кашни сăмахна тăнлатпăр,
Қăмăл тараси
Хăш еннелле туртăнасси —
Ырă мăшкăл курĕ е чыс?
Санран килет, артист.

## НЕЛЛИ СМОРОДИНОВĂНА

Театр —
шурлăх евĕр
ĕмет,
илет
хала.

Театр —
тӳпе евĕр
çĕклет,
чĕнет
мала.

...Артист, ан хуçăл!
Санпа çеç театрăн куçĕ уçă.
..Артист, ан курнăç!
Театрсăр сан çуккă пурнăç.

...Театрпа артист —
пĕр тĕвĕ,
пĕр çĕвĕ,
пĕр кĕвĕ...

Тĕвви —
ан салантăр,
Çĕвви —
ан ситрелтĕр,
Кĕвви —
ан кивелтĕр!..

* * *

СССР халăх артистне
*Валерий Яковлева*

Хăш-пĕрисем танккаççĕ хупаха —
Шыраççĕ сăвă алтăр тĕпĕнче...
Пухатăп эп хавхалану-ахах
Тăван чăваш театрĕнче.

Кĕретĕп çак илемлĕ кермене
Кĕрейнĕн Сарă Кунăн çĕршывне...
Куç умĕнчех пулса иртет кĕтрет —
Ĕмĕтпеле чăн пурнăç пĕрлешет.

Артист! Эс юмахри асамçă пуль!
Сив чунсенчен те кăларан куççуль —
Пултарăн эсĕ вилмеллех хĕртме,
Пултарăн вилнине те кĕç чĕртме!

Ĕçӳ сан пархатарлă!
Çун, артист!
Кураканран сана хисеп те чыс!

## АМĂШĔ

(Федерико Гарсия Лоркăн
«Юнлă туй» пьеси тăрăх лартнă
спектакле пăхнă май çуралнă сăвă)

СССР халăх артисткине
*Вера Кузьминана* халаллатăп.

Чăваш çĕрĕнче çуралса ӳснĕскер,
Чăваш инкекне-савнăçне тӳснĕскер,
Испани хĕрарăмĕн мăн кăмăлне,
Испани хĕрарăмĕн чун тăвăлне,
Вулкан пек вĕри чĕри çулăмне
Епле кăларатăн эс халăх умне?..

Ăçтан эс тупатăн çавтер вăй-хăват?..
Çавтер вăй-хăват ăçтан вăл тухать?!.
Тен, унăн сăлтавĕ — чамасăр талант?..
Тен, эсĕ, аппаçăм,— хĕрарăм-атлант?..

Эс — амăшĕ. АМĂШ! Ак тупсăмĕ, ак!
Санра Амăшин Пысăк Чунĕ, паллах...
Паллах, çавăнпа, хăв Анне пулнăран
Çапла ĕненӳллĕ пулма пултаран.

Испани, Итали, Пăлхар, Индостан,
Америка, Африка е Чăвашстан
Хĕрарăмĕн-амăшĕн пĕр вут-чĕре,
Тăван ачисемшĕн ялан вăл хĕрет.

Тăван ачасемшĕн кашниййĕ эпир,
Вĕсем курассишĕн телейлĕ çут ир,
Вĕсен чыс-хисепĕшĕн вут-çулăмпа
Çунатпăр хыпса...
Эс çавăнпа,
Чăваш çĕрĕнче çуралса ӳснĕскер,

Чăваш инкекне-савнăçне тӳснĕскер,
Чăваш ачине кăкăр ĕмĕртнĕскер,
Чăваш талантне чĕрӳнте хĕртнĕскер,
Испани хĕрарăмĕн чун тăвăлне,
Испани хĕрарăмĕн мăн кăмăлне,
Вулкан пек вĕри чĕри çулăмне
Маттур кăларан тăван халăх умне!

## ЧĂВАШ ТЕАТРНЕ

Чăваш театрĕ!
Эс — мираж мар, эс — чĕп-чĕрĕ илем!
Тăван чĕлхесĕрлĕх пушхирĕнчи оазис...
Сан патналла хевтеллĕн туртăнаççĕ
Илемлĕхшĕн хыпса çунан чунсем.

..Асамлă кайăк сулнăн çунатне,
Чаршав яр! уçăлать. Асамлăх
Вĕçсе анать куракансем патне,
Чуна кĕрсе вăл вырнаçать яланлăх.

Асамлăх альма матерĕ — театр!
Сан кĕтретӳ ĕмĕрсене çутаттăр.

* * *

*Любовь Федоровӑна,*
юратнӑ артисткӑна

Парнелӗр чечексем артистсене,
Пуҫа тайса саламлӑр вӗсене!
Хавас самант кӳрес тесе пире,
Ҫунать артист, пӗлмест ҫӗре-ире.
Эпир канатпӑр — тар тӑкать артист.
Алкумӗнчех тӑрать ун ҫул арчи...
Ҫӑвать-и ҫумӑр, пылчӑк мӑй таран —
Кӗтеҫҫӗ-ҫке — килте епле ларан?!.
Тухать, ав, хӑтлӑ, ҫутӑ хваттертен,
Ҫӳрет артист ялта та уй-хирте...

Пӗр саншӑн, маншӑн пурӑнать артист,
Артистсене, туссем, тусамӑр чыс!
Парнелӗр чечексем артистсене,
Пуҫа тайса саламлӑр вӗсене!

## ЕФИМ НИКИТИНА

Çитмӗлте те яшă чунлă çынсене — мухтав!
Çитмӗлте те яшă чунлă çынсене — чыс, тав!
Вӗсем Илем кӳреççӗ пурнăçа,
Вӗсем Хевте кӳреççӗ пурнăçа!

Хăш-пӗрисем ватсупнă çирӗмрех,
Хăш-пӗрисем ват хыпнă çирӗмрех.
Вӗсем тӗссӗрлетеççӗ пурнăçа,
Вӗсем чыссăрлатаççӗ пурнăçа...

Çитмӗлте те яшă чунлă çынсене — мухтав!
Çитмӗлте те яшă чунлă çынсене — чыс, тав!

* * *

Приди, приди, час вдохновенья...

*А. С. Пушкин*

Килсем, килсем, хавхалану саманчĕ,
Сирсем тĕлĕкрилле айван куна.
Вуткайӑкла ума вĕҫсе ансамччĕ —
Хĕрӳлĕхпе хыптар ҫывран юна.

Килсем, килсем, хавхалану саманчĕ,
Сана кĕтсе хупмастӑп куҫӑма.
Ҫуталчĕ шухӑш, туйӑм та капланчĕ —
Пит йывӑр вĕсене тытса тӑма.

Килсем, килсем, хавхалану саманчĕ,
Ҫунатлантар асаплӑ чунӑма,—
Вучахунта ҫĕр пин сӑмах шӑранчĕ —
Ҫунтартӑр умӑмри шур хутӑма...

Килсем, килсем, хавхалану саманчĕ!..

* * *

Эп пурӑнатӑп ҫиччӗмӗш хутра...
*Роберт Минуллин*

Эп пурӑнатӑп тӑххӑрмӗш хутра,
Шап-шурӑ, мӑнӑ, вӗр-ҫӗнӗ ҫуртра.
Ҫарап пекех вӑл туйӑнать мана,
Ҫаҫ сӗмӗ хупласассӑн таврана.

Ҫаҫ сӗмӗ хупласассӑн таврана,
Балкон ҫинче тӑратӑп пӗр кана:
Йӗри-тавра шап-шурӑ ҫӗн ҫуртсем —
Ҫап-ҫутӑ кантӑклӑ карап-ҫуртсем.

Ҫап-ҫутӑ кантӑклӑ карап-ҫуртсем...
Ҫаҫ сӗмлӗхне касса-ҫурса вӗсем
Ишеҫҫӗ пурӑнӑҫ тинӗсӗнче,
Ҫурс тытнӑ карапсем инҫе-инҫе...

Ҫурс тытнӑ карапсем инҫе-инҫе
Малашлӑха. Сив хумсене ҫӗнсе,
Вак-тӗвеке борт айккине вӑрса
Ишеҫҫӗ, ӗмӗт-парӑса карса!

Эп пурӑнатӑп тӑххӑрмӗш хутра...
Поэт чӗри ялан хӗрӳ вутра.
Эп пӗччен мар кун-ҫул тинӗсӗнче,
Эп пӗтес ҫук сив тунсӑх хумӗнче...
Эп ҫынсемпе пӗрле.
Эй, тинӗсӗм, кӗрле!..

## ПИЛ

Юррăм, çунтăм эп, юратрăм,
Пурăнма сана çуратрăм.
Ирĕке вĕçсем — чун уçă,
Çынсене кӳрсем эс усă.

Уй-хир урлă, сăрт-сăрт урлă
Вĕç эс, юррăм, çилçунатлăн.
Пултăрин çул шывлă-юрлă —
Тӳпене çĕклен хăватлăн!..

Юррăма кашни çын илттĕр,
Хăйпеле çула вăл илтĕр:
Йывăр çăкĕ пултăр çăмăл,
Вара тулĕ манăн кăмăл.

* * *

Çутçанталăкпа пĕрле кулатăп.
Çутçанталăкпа пĕрле улатăп...
Сăвăç — çутçанталăкăн ачи,
Чи ачаш та чи патвар калчи...

* * *

Поэт туссем — хĕвел чунсем!
Пĕр шелсĕр тăкнăран хĕлхем —
Ниме тăман сив кантăк ванчăкне
Чĕртсе паратăр çăлтăр илемне...

* * *

Ķаллех тухатăп эп уя-хире...
Çĕнтертĕм Эсремет вăйне — чире.
Леш тĕнчене ямарĕ Çĕр-анне,
Эппин, эп кирлĕ-ха çут тĕнчене.

Ķаллех тытатăп шĕвĕр кăранташ.
Ķаллех шур хутăм — манăн хурăнташ,—
Унпа эп калаçатăп çĕр хута,
Чуна çут факел пек яри çутап...

* * *

Поэтăн хăй тĕнчи пур тĕнчере...
Поэт-ĕçченĕн хирĕ вăл — чĕре.
Ыр ĕмĕт-туйăм вăрлăхне акса,
Чун тарĕпе шеллевсĕр шăварса,
Пур вак-тĕвек çумкурăкне çăлса
Ĕçлет поэт, ĕçлет çунатланса,
Йĕркен-йĕркен сăвă пуçтарса,
Хывать поэзин анлă пӳлмине...
...Ķаллех акать ыр вăрлăх чĕрине!

## МИТТА ВАÇЛЕЙĔН ВИЛТĂПРИ ÇИНЧЕ

(Самант сăвви — экспромт)

> Ан тив, хисеп те чыс та ан курам,
> Пин юррăмран пĕри анчах юлайтăр...
> Ăна тăван хавхаланса юрлатăр,
> Вара ман канлĕ пулĕччĕ тăпрам.
>
> *Митта Ваçлейĕ*

Хисеп те чыс сана, Ваçлей пичче!
Пин юрруна хавхаланса юрлатпăр.
Кашни сăвву — чĕп-чĕрĕ çут ĕнче,
Чун çекĕлне шăрçаласа çакатпăр.

Хисеп те чыс сана, Ваçлей пичче!
Тăпру çине чечек çыххи хуратпăр.
Сан умăнта пуçне таять тĕнче.
Иртнийĕ витĕр ырана куратпăр.

Хисеп те чыс сана, Ваçлей пичче!
Сан ятупа малашлăха утатпăр.
Асаплă та мухтавлă çĕр çинче
Сан ятупа çĕн урамсем çутатпăр.

Хисеп те чыс сана, Ваçлей пичче!
Йывăр тăпру сан çăмăл, канлĕ пултăр.
Чăваш поэзийĕн çӳл тӳпинче
Сан хĕвелӳ ялан çутаттăр-култăр!

Хисеп те чыс сана, Ваçлей пичче!

## ХУСАНКАЯ

Мĕн тери телей чăваш çыннишĕн
Аслă чунлă Хусанкай пурри!
Халăха çавтер парне панишĕн
Тавтапуç сана, Илем турри!

Хусанкай хĕвелĕ йăлтăр çутă
Вĕçсĕрлĕх — Поэзи тӳпинче.
«Ан çĕтĕр çулран, хăюллăн утăр!» —
Вăй чĕртет чăваш чĕрисенче...

Хусанкай-ертӳçĕ! Çамрăк çарăн
Қăмăлĕ хĕрӳллĕ, паттăрла!
Шăллусем-йăмăкусем патваррăн
Сан ĕçне тăсаççĕ малалла.

«Ман чăваш ятне кăштах çĕклесчĕ»,—
Эс сăпайлăн çырнă, вутланса.
Пирĕн те çак ĕмĕтпех ĕçлесчĕ,
Халăх чĕрине йăлт ăнланса.

Чăвашла чăвашшăн юр юрлатпăр:
«Чĕлхӳне, чăваш, манса ан кай!»
«Эпир пулнă, пур, ялан пулатпăр!»
Пулнă, пур, пулатăн, Хусанкай!

## СТАНИСЛАВ РЕПЬЯХА

(Экспромт)

Ют саншăн тĕркешӳ, пайлав-кăшлав...
Санран эпир нихçан илтмен йăслав,—
Туртатăн эсĕ мĕн пысăкăш «лав»,
Пиччемĕр-тусăмăр Репьях Станислав!

Сана эпир усратпăр чĕрере,
Эс пуррипе чĕремĕр хĕрӳрех.
Эс пирĕншĕн — çула чĕнен ялав,
Пиччемĕр-тусăмăр Репьях Станислав!

Ытарайми ыр кăмăлна пула
Чернигов пирĕншĕн — тăван хула.
Пире чунтан савнишĕн пысăк тав,
Пиччемĕр-тусăмăр Репьях Станислав!

Çут тĕнчере кашни сан пек пулсан,
Аннемĕр-çĕр пурнатчĕ йăл кулса.
Сана вăй патăр манăн çак хайлав,
Пиччемĕр-тусăмăр, Репьях Станислав!

*Чернигов—Мускав пуйăс*

## ЭС ТАШЛАМАХ ÇУРАЛНĂ

Пушкăрт хĕр-сăвăçне
*Гульфия Юнусовăна*

Эс ташламах çуралнă пулĕ,
Гульфия тантăш — сăвă амăш.
Хĕм сапакан хĕрӳ вутчулĕ —
Ташланă чух эс.
Юн вăратмăш!

Сан хĕмӳпе хыпса илетĕп.
Эп чăтаймастăп!
Вирхĕнетĕп
Вăй картине.
Шăлса илетĕп
Куççулĕме.
Эп чĕрĕлетĕп!

Курайсăр, купăссăр ташлатпăр.
Эс — чăвашла.
Эп — пушкăртла.
Сăмахсăрах йăлт ăнкаратпăр.
Сăмахсăрах йăлт ăнланатпăр.

Эс ташламах çуралнă пулĕ,
Гульфия тантăш — сăвă амăш!
Чун çиййĕнчи сив арман чулĕ
Пулса тăрайрĕ халь вутчулĕ.

Эп хам та халĕ — юн вăратмăш!
Эп хам та халĕ — чун çунтармăш!
Гульфия тантăшăм!

* * *

*Алексей Воробьева*

Поэтсем вилсессӗн те вилмеҫҫӗ.
Ма тесессӗн хӗвелпе пӗрех
Сывӑ пулӗ ӗмӗрех поэзи,
Чӗрӗ сывлӑш кӳрӗ ӗмӗрех.

Сӑвӑ йӗркисем юр пек ӳкмеҫҫӗ,
Хура тар тӑкса хайлать поэт.
Ҫутӑ та сӑваплӑ унӑн ӗҫӗ
Тасарах пулма пире чӗнет.

Пурнӑҫӗ поэтӑн — чӗрӗ ҫулӑм,
Ӑшшине парать вӑл халӑха.
Халӑх асӗнчех ун ӗҫӗ юлӗ,
Утӗ халӑхпа малашлӑха.

Поэтсем вилсессӗн те вилмеҫҫӗ,
Ма тесессӗн халӑхӗ вилмест.

**ВЛАДИМИР РОМАНОВА**

Эп — чăваш. Эс — удмурт.
Саламăма чуну çине эс урт —
Сана вăл ăшăттăр шартламара,
Сана вăл уçăлтартăр шăрăхра.

Эп — чăваш. Эс — удмурт.
Санпа эпир — ӳркевсĕр икĕ ылтăн хурт.
Пĕр çаранран теприн çине вĕçетпĕр,
Хавхалану чечекĕн сĕткенне ĕçетпĕр.

Эп — чăваш. Эс — удмурт.
Санпа эпир пуратпăр шурă çурт —
Чун çутинчен, çавра кирпĕчсенчен.
Пике-Поэзи пулĕ ун хуçи.
Пике-Поэзи — чун-чĕре уççи.
Çӳл ĕмĕтлĕ таса çынсем кăна
Пулма пултарĕç çав çуртра хăна.

Эп — чăваш. Эс — удмурт.
Чăн-чăн поэтшăн кĕвĕçӳлĕх — ют.
Ыр туслăха упрар, ырми ĕçлер,
Поэзи керменне çӳле çĕклер.
Чĕремĕрсен хĕрӳ юрри-симпылĕ
Туссемшĕн сиплĕх-пиллĕх пулĕ.

## МАРИЯ ВОЛКОВĂНА

Марье аппа! Паян сана асилтĕм
Шăв-шавлă пурăнăç авăрĕнче...
Эс пурăннă подвал-çурта, ак, килтĕм,
Тăратăп хупă кантăк умĕнче.

Сан хваттерӳн чӳречинчен курнаççĕ
Иртсе çӳрен çынсен пушмакĕсем.
Чунун таса чӳречинче çунаççĕ
Çут çăлтăрсем — нихçан сӳнми илем!

Вăл илеме усал вăйсем варлаймĕç,
Çĕр çумĕпе шăвать элек-çĕлен...
Вут чунлисем çĕкленĕç-çунатланĕç —
Вăй илĕç çăлтăрлă сан тĕнчӳнтен.

....Паян тапас чĕрӳ — хĕрӳ кăварччĕ —
Ăна шар! çурчĕ сив сăмах-йĕтре.
Кăвар чĕрӳ хĕлхем сапса хăварчĕ —
Ятна хуплаймĕ манăçу-тĕтре.

Сан сăнару кун-çул пăнтăхĕ çийĕн
Хĕвел шевли пек ялкăшса чĕтрет...
...Хĕрарăм сăвăç, эс — хĕвел елчийĕ,
Хĕрарăм сăвăç, эс — сӳнми кĕтрет!..

* * *

Миçе хутчен хыпса илсе хӗмлентӗн,
Вутлантӑн та кӗллентӗн эс, чӗрем?
Çӗн шанчӑкпа каллех-каллех сӗмлентӗн.
Чӗрлӗх шывне шырарӑн тӗнчере.

Чӗп-чӗрӗ юнлӑ куççульпе йӗретӗн —
Кӗтни-шанни — ултав-суя пулсан...
Эс феникс кайӑк евӗр чӗрӗлетӗн
Кӗлрен каллех, çӗн ӗмӗтпе тулса.
Каллех сӳнми хаваслӑхпа çунатӑн,
Çурхи хӗвел пек çутӑ та вӗри.
Вутна сӳнтерӗ, тен, ултав çуначӗ?!
...Çунма çуралнӑ, çун, поэт чӗри!..

* * *

Утрӑм-утрӑм —
Çул юппине тухрӑм.
Çул юппинче — мӑн чул.
Мӑн чул çинче саспалли тем чул:
Сылтӑмалла кайсан — ырлӑх тупӑн.
Сулахаялла кайсан — пурлӑх тупӑн.
Тӳррипе кайсан — хурлӑх тупӑн.
Ăçталла каяс?
Мӗн умӗнче пуç таяс?..
Шутларӑм-шутларӑм —
Шут тытма ӗлкӗреймерӗм,
Ура утрӗ тӳрӗ çулпа –
Хурлӑх çулӗпе...
Хурлӑхсӑр-асапсӑр çуралмасть сӑвӑ.
Хурлӑхсӑр-асапсӑр çуралмӗ сӑвӑç...

## СĂВВĂМА

Пĕлетĕп — эсĕ пур.
Эс — çумăр, эс — шур юр.
Эс — савнăç, хурлăх — эс
Куççулĕ, кулă — эс

Пĕлетĕп — эсĕ пур.
Эс — сивĕ хĕл, ăш çур,
Эс — нӳрлĕ кĕр, çулла,
Эс — эрĕм, эс — çырла.

Пĕлетĕп — эсĕ пур.
Эс — пирĕшти, эс — мур.
Эс — тамăк, эс — çăтмах.
Эс — юрă, эс — юмах.

Эс — аякра, таçта.
Эс çывăхра, кунта.
Эс ман юнра, чунра.
Эс ман кашни кунра.

Паян-и е ыран
Эс ман пата пыран.
Ман сăввăм — ман пепкем,
Вут-чунăмри хĕлхем,
Эс çуралаймăн мансăр...

Эп пурнаймастăп сансăр
Килсем! Кил!!
ПЕХИЛ!!!

* * *

Сӑвӑпа мана ҫыхнӑ шӑпа...
Сӑвӑпа пурӑнап,
Сӑвӑпа.
Сӑвӑлатӑп урай ҫунӑ чух,
Сӑвӑлатӑп кӗпе ухнӑ чух,
Сӑвӑлатӑп хӑна пӑхнӑ чух,
Сӑвӑлатӑп ачам ӗмнӗ чух.
Сӑвӑлатӑп кӳтсе ӑшӑмра...
Сӑвӑлатӑп кӗтсе мӑшӑра,
Ачашлатӑп чӗре савнине,
Тупнӑ евӗр телей сӑввине...
Эп — йӑлттам сӑмахсен тыткӑнҫи.
Сасӑ-кӗвӗ — ман чун тыткӑчи.
Шӑпа пӳрнӗ хӗвеллӗ асап
Пӑтратать пӗрмаях ман ӑса.
Йӗркесем йӑлкӑшаҫҫӗ шевлен,
Илӗртеҫҫӗ, чӗнеҫҫӗ куллен.
Састашсем, чанклатса, сӑнчӑр пек,
Шухӑшра тӗркӗшеҫҫӗ текех.
Тыткӑнра, тыткӑнра ӗмӗрех —
Ҫанӑҫ ҫук. Чунӑм савӑк пӗрех.
Ҫак асап-тыткӑнран ҫӑлӑнсан,
Тӗнчем ларӗ вут-хӗмсӗр шӑнса,
Пурнӑҫ тулӗ кӗлпе, хывӑхпа.
Сӑвӑпа пурӑнап,
Сӑвӑпа.

## ПОЭТ ЧĔРИ

Поэт чĕри —
Чечек пекех чечен.
Поэт чĕри —
Ҫăвар пекех вĕри
Чи юлашки юрри
Ҫураличчен.

* * *

«Санран
сăвăç тăватăпах!» —
тесе
тĕллев лартнă-тăр эс,
шăпам.
Йывăрлăх хыççăн
йывăрлăх
купи-купипех
тăкатăн
сукмакăм çине.
Йăва çавăрса,
чĕпписем тухасса
лăпкăн кĕтекен кайăк евĕр
пуçланăччĕ пурăнма
тин çеç...
— Пĕчĕк савăнăçпа
ан лар
лăпланса! —
хаяррăн кăшкăртăн
самантрах.
Пуç тăрринчи мачча
ишĕлчĕ лаштăр!
Ҫаллех çӳлте
куç виçейми тӳпе.

Ҫăн-кăвак
илĕртӳллĕ тӳпе...
Шăпам, тавах сана!
Вĕçес тесе,
аманнă çунаттăмсене
майлатăп васкаварлăн.
Анчах... Хура пĕлĕтсем
тухрĕç чашкăрса,
хура çĕлен евĕр.
Тăкăнать
сивĕ наркăмăш
хĕвĕме.
Урнă çил
хуçать
çунатсене.
Ниçта çук хӳтлĕх.
Аптраса
пăшăлтататăп:
— Эй, шăпам,
ăнлансамччĕ,
ман сăвăç пулас килмест...
Эп — хĕрарăм...
Хĕрарăм телейĕ çитет мана.
Шăпам
шăлне йĕрсе кулать:
— Хэ-хэ!
Мана улталаймăн!
Эсĕ те
ыттисем пекех
икĕпитлĕ...
Ак сана суйнишĕн! —
тет те
тата хытăрах
туртса çапать
вут сирпĕтен саламатпа
çурăм тăрăх...

## КĔТНИ

Тăлт-тăлт-тăлт...
Эс хăв çинчен систертĕн
Ăнсăртран тĕксе тяппупалан.
Хыпар патăн, савнăçăм-кĕтретĕм,
Пĕтĕм шухăш тулчĕ санпалан...

Чĕремре шăнăçайми ăш туйăм
Илчĕ тĕнчене ытамласа.
Сăпка евĕр курăнать çĕн уйăх.
Пĕлĕт çивитти пекех таса.

Пралуксем çинче лараççĕ шăпăрт
Нота-çăлтăрсем...

Сан ятупа
Пуç ухса çил шуххăн калĕ шăпăр,
Тĕнчене килсен эс хаваспа.

## САПКА ЮРРИ

Хĕвел анать, каç пулать,
Вăхăт малаллах чупать.
Пĕчĕк хĕрĕм вăй илет,
Кунран-кунах çитĕнет.

Ачаш тути анаслать,
Кăвак куçĕ хупăнать.
Çывăр, пĕчĕк Илемпи,
Маншăн эс чи илемли.

Çил кĕресшĕн пӳлĕме,
Сĕртĕнесшĕн хĕрĕме.
Кантăкран пăхса çӳрет,
Çил ман хыççăн ĕнĕрлет:
Ачаш тути анаслать,
Кăвак куçĕ хупăнать.
Çывăр, пĕчĕк Илемпи,
Маншăн эс чи илемли.

Каçĕ карать чаршавне,
Вăйлататать вăрман шавне.
Шăпчăк чĕппи — йăвара,
Пĕчĕк хĕрĕм — сăпкара.

Ачаш тути анаслать,
Кăвак куçĕ хупăнать.
Çывăр, пĕчĕк Илемпи,
Маншăн эс чи илемли.

Пурнăç патăм эп сана,
Эс таса упра ăна.
Эсĕ ман чи хаклă мул.
Çитĕнсен, чăн-чăн çын пул.

Ачаш тути анаслать,
Ҫăвак куҫĕ хупăнать.
Ҫывăр, пĕчĕк Илемпи,
Маншăн эс чи илемли.

* * *

Ҫичĕ тинĕс тĕпне анма,
Ҫичĕ пĕлĕт тăрне ухма,
Ҫичĕ тамăк витĕр тухма
Хатĕр поэт
Пĕр сăвăшăн...
...Тăван халăх сăвва йышăнинччĕ,
Тăван халăх сăвва юратинччĕ.

* * *

Хĕм — поэзин анлă хирĕнче
Ывăнми акам, вырам, ҫумлам.
Манăн ĕҫĕм халăх ĕҫĕнче
Пултăрин пĕр пĕчĕкҫĕ тумлам.

* * *

— Чикан евĕр эсĕ хуп-хура,
Лăстăр кăтруна кĕмест тура.
Ывăлу сап-сарă.
Эй, ача!
Хăвăн мар пуль,— теççĕ,— ку ача.
— Хамăнах-çке,— тетĕп,— хамăнах,
Хĕвелпе чӳхерĕм эп ăна.

## АЧАМСЕНЕ

Эп пуçланă юрра эсĕр тăсăр.
Эпĕ чавнă пусран эсĕр ăсăр...
Манăн юррăм ютланмĕ,
Манăн пуссăм путланмĕ!

Вилĕмрен эп пĕртте хăрамастăп.
Ма тесессĕн — эп çухалмастăп.
Ачамсем, сирĕнте эпĕ пурнăп.
Сирĕн куçăрсенче эпĕ курнăп...

* * *

Ывăлăм,
Сана курсассăнах,
Чĕреçĕм сар çу евĕр ирĕлет,
Пурнас-ĕçлес хевтеçĕм чĕрĕлет.
Ан тив, эп çĕр çинче хăна кăна —
Нихçан вилмес-пĕтмессĕн туйăнать.

Ывăлăм,
Тупта хăв сассуна,—
Çын ячĕпе эс килнĕ çĕр çине.
Сана пиллетĕп чунăм çутине.
Саламласа кĕт эс Пулас Куна.
Мăнуксене пилле хĕрӳ юна...

Ывăлăм,
Сап-сарă сан çӳçӳ,
Эс хĕвел принцĕ-кончики пекех.
Тавралăха шевле тăкан текех.
Хĕвеллĕ, çутă пултăрччĕ ĕçӳ...
Чунна ан çитĕр путсĕр кĕвĕçӳ...

## ЫВӐЛӐМА

Çуралтӑн эс телей курма-ши?..

*Алексей Воробьев*

Çуралтӑн эсӗ, пӗчӗк ывӑл.
Çуралтӑн-ши телей курма?..
Пулайӗ-ши пуçу сан сывӑ?
Пуçламӗ-ши тӑшман урма?..

Утас çулна вӑл аршӑн-аршӑн
Виçмест-ши сӗм ӗмӗтӗнче?
Эсрел кӑмпи сан валли мар-ши?
Ӳсет нейтрон вӑрманӗнче?..

Хӑратӑп эп,— анне-хӗрарӑм,—
Хӗвел çути хупланасран.
Хӑратӑп эп,— анне-хӗрарӑм,—
Аннемӗр-çӗр тӗп пуласран.

Асапланса сана çуратрӑм
Вилӗмшӗн мар-çке...
Пурӑнма!
Çуратрӑм та сана, юратрӑм.
Эс — чи илемлӗ юррӑм ман.

Мӗскер тӑвам-ха, ывлӑм-юррӑм,
Сана пӗр вӗçӗм юрлама?
Епле сыхлам-ха?!.
Урӑм-сурӑм
Сана кӑшласшӑн Вутама...

Эп, сан аннӳ, чӗнсе калатӑп
Çут тӗнчери ыр çынсене:
Тусӑмӑрсем! Тӑрар хӑватлӑн —
Сыхлар тӑван Çӗр-аннене!

«Вăрçă» сăмах çын чĕлхинчен
Çухалтăр ирĕк çĕр çинче!
Вара кашни анне-хĕрарăм
Ачи-пăчишĕн тек хăрамĕ,
Çĕн чун килсессĕн тĕнчене,
Çак шухăш килмĕ ун пуçне:
«Çуралтăн-ши телей курма?
Пуçламĕ-ши тăшман урма?»

* * *

Курсамăр, курăр, тусăмсем,
Çăп-çăмăл шурă пĕлĕтсем
Çӳреççĕ çӳллĕ тӳпере,
Шур сурăхсем пек, кĕпĕрех!

Çапла пулинччĕ ĕмĕрех.

Хăрушă вилĕм ĕмĕлки,
Тăкса вут-çулăм, хĕм кĕлти,
Ан вĕçтĕрччĕ пуç çийĕнче,
Ан шутăрччĕ çĕр çумĕнче!

Хĕвеллĕ тăтăрччĕ тĕнче.

* * *

Над поэтами — только боги!..

*Павло Загребельный*

Японире поэтсен сăнĕсем
храмсенче çакăнса тăраççĕ.

Поэт чунĕ — ирĕклĕ чĕкеç...
Поэтсем çиййĕн — турăсем çеç...
Турă хăй шухăшне
Кĕртет поэт чунне-ăшне,
Ун чĕлхипеле
Пуплет çынсемпеле.

Эп поэт çеç мар,
Эп — поэт амăшĕ.
Манри хĕрӳ кăвар
Ывăлăмра талкăшĕ.

— Ывăлăм, эс ман пуласлăхăм,
Ĕмĕрлĕхе юласлăхăм, аслăхăм.
Ĕçле, ывăлăм, турăсене итле.
Ырра мухта, усала питле.

Вĕç хăюллăн, хастар,
Йывăрлăхран ан тар.
Çунатна анлăн сар:
Поэт чунĕ — ирĕклĕ чĕкеç...
Поэтсем çиййĕн — турăсем çеç.

## АН ПУЛТĂР ВĂРÇĂ!

Ан пултăр вăрçă çĕр çинче!
Тăп тăтăр пирĕн çут тĕнче!
Çак ĕмĕтпе мĕльюн чĕре
Пĕр харăссăн тапать, хĕрет.

Эпир çуралнă пурăнма,
Телей те савăнăç курма.
Эпир çуралнă ĕçлеме,
Хĕвеллĕх çурчĕ çĕклеме.

Эпир çуралнă юратма,
Маттур хĕр-ывăл çуратма.
Пире вут-вăрçă кирлĕ мар!
Телейшĕн, миршĕн кар тăрар!

* * *

Каçсерен
Ача сассипе вăранатăп...
Ӳпкевлĕн йĕрет вăл,
Каçăхса кайса,
Чуна çурса...
Сиксе тăратăп.
Итлетĕп.
Пӳлĕмре
Ачамсем —
Ывăлăмпа хĕрĕм —
Мăшлатса сывлани çеç илтĕнет.

Куçа хупатăп — каллех
Ача сасси...
Анланса илетĕп:

Ку — манăн виççĕмĕш ачам,
Çуралмасăрах вилнĕскер,
Ӳпкелешсе,
**Ĕсĕклесе макăрать...**
Каçсерен ача сассипе вăранатăп...
...Кĕçĕр тĕллентĕм эп ăна —
Ман тавра
Çӳретчĕ вăл ярăнса
Сывлăшра.
Чăннипе те — тĕлĕнтермĕш ача!
Кĕтрет...
Алли вырăнне — ик пĕчĕк çунат.
Куçĕ — çут çăлтăр.
Çӳçĕ — сап-сарă шевле.
Тытас тесе —
Тăсрăм алла...
Вĕçрĕ хăпарчĕ тӳпене,
Çухалчĕ куçран...
Виçесĕр хуйхăпа шуйханса
Вăрантăм...
Кантăк кăваклăхĕнче —
Çап-çутă ик çăлтăр.
Ман çуралман ачамăн
Куçĕсем мар-ши вĕсем?..

## АННЕМ

*Клавдия Васильевна*
*Яковлевăна* — çичĕ
ача пăхса ÿстернĕ
аннеме —
халалласа

Шурă юрĕ çурĕ
Кĕçĕр çĕрĕпе.
Шурă юр — шур юрă,—
Илтрĕм чĕрепе.
Шур юр çурĕ, иртрĕ
Ир пулас енне.
Юр-ши пуçна витрĕ,
Шур çÿçлĕ аннем?..

Уйăх-кимĕ шурĕ
Пĕлĕт-хум çинче.
Уйăх сана курĕ
Кантăк куçĕнчен.
Вăл сана калатăр
Чунăм саламне.
Сан çинчен шутлатăп,
Чун панă анне.

Сана йывăр пулнă
Ÿстерме пире.
Пурпĕрех эс кулнă —
Кĕтнĕ çут ире.
Хăв çинчен эс маннă,
Канлĕн çывăрман.
Эс, аннеçĕм, шаннă
Çын пирте курма.

Куç хупмарăм кĕçĕр,—
Вăранать хула.

Пĕчĕкçĕ пепкеçĕм
Тĕлĕкре кулать.
Анланап, аннеçĕм,
Шăпуна санне...
Тав сана, аннеçĕм,
Хам та халь — анне.

* * *

Аннем,
ывăнтăм эп сансăр...
Хулу-çунатту айне
чĕкеç чĕппи пек
пуçа чиксе ларатăп
асăмра.
Илтетĕп:
Асаилӳ çаранĕнче
ачалăх лашисем кĕçенчĕç.
Куратăп:
чупаççĕ
ĕрĕхсе,
пуçĕсене уха-уха,
чĕрнисемпе вут кăларса
чупаççĕ...
Вĕçеççĕ
пĕлĕте çити
ем-ешĕл çилхисем...
Малта —
çунатлă урхамах,
юр пек шап-шурăскер...
Çыр хĕрринче
пĕчĕкçĕ хĕрача ларать,
пуç кăшăлĕ çыхса
сенкер чечексенчен.

Турать ăш çил
ун йăм-хура çӳçне.
Улма пекех чăп-чăмăр
питçăмарти çинче
вылять
хĕвел шевли...
Чупаççĕ лашасем,
чупаççĕ хĕрача çинех!
Аннеçĕм!
Таптаççĕ!..
Те ман сасса илтсе,
те хăех сиссе,
тăчĕ сиксе хĕрача.
Аллинчи пуç кăшăлĕ
ывтăнчĕ шыва,
юхрĕ
юхăма май...
Куçне чарса,
тĕлĕнсе
пăхрĕ хĕрача
çунатлă урхамах çине.
Çăлтăр пек çиçрĕ ун куçĕ.
Ячĕ тытрĕ
ăна шур çилхинчен.
Урхамах,
тарăхнăскер,
тăчĕ чĕвен.
Вара
чупрĕ кукăррăн-макăррăн
малалла.
Хĕрача аллинчен вĕçерĕнесшĕн
чупрĕ
шăтăклă-путăклă,
тункаталлă çĕрпе.
Юлчĕç ытти лашасем çаранра
кĕçенсе...

Вĕçет,
ĕрĕхет урхамах.
Чупать ун хыççăн хĕрача,
вĕçертмест
шур çилхене.
Ларасшăн вăл,
шухăскер,
ун çине утланса.
Хĕрача чупнă май
куç умĕнчех пычĕ ӳссе,
çитĕнсе...
Ах!
Такăнчĕ тункатаран...
Çемçелчĕ алли...
Ларать, ав, йĕрсе
çĕр çинче,
аллипе пăчăртаса
аманнă урине.
Пытăм ун патне,
аллăмпа сĕртĕнтĕм
шуралма пуçланă çӳçне.
Пуçне
çĕклерĕ вăл,
куççулĕ витĕр
пăхрĕ
ман çине...
Ах, аннеçĕм!
Ку эпĕ-çке!
Çилçунат ăçта?!.
Ав,
вĕçет вăл тӳпере.
Шурă пĕлĕт-хӳрипе
йĕкĕлтесе
сĕлтет мана...
Аннем,
ывăнтăм эп сансăр...

* * *

Ним туса ёлкёрме çук кун каçипе,
Кун — кайăк сăмси пек —
Кĕп-кĕске.
Хĕвел — пўске,
Хĕвелтухăç ывăтса янăскер,
Хăвăртах
Лекет
Хĕвеланăç ытамне.
Кун,
Эрне,
Уйăх,
Çулталăк...
Ăçта, ăçта ачалăх?
Хăш çырмасем хĕрринче?
Хăш сăрт-тусем тăрринче?
Мĕн тери вăрăмччĕ
Ача чухне кун...
Хĕвел-мăран чĕрчун,
Хĕвелтухăç картинчен
мĕкĕлтетсе тухнăскер,
Кĕртес тесен те кĕместчĕ
Хĕвеланăç картине.
Мăранскер...
Нихçан вĕçленмессĕн туйăнатчĕ кун.
Чупа-чупа тухатчĕ ман чун...
Хурсем юри, мăшкăлланă пек,
Карти-картипе
Чупатчĕç пăрçа вăтăрма...
Хир хуралçи тухатчĕ хăтăрма...
Эх, ачупчу!
Тĕнче пĕтнĕн туйăнатчĕ
вăл вăрçнă чух...
Тем пама
Хатĕр эп халь

Çав самантшăн —
Вăрçтăр мана хир хуралçи,
Кӳлĕре кĕрттĕр «тĕне»...
Самантлăха çеç таврăнасчĕ
Ачалăх тĕнчине...

* * *

*Аттене*

Иртнĕ каç эп куç хупман,
Пысăк хурлăх пулчĕ ман.
Пăхрăм тĕкĕрĕм çине —
Хытрăм тĕлĕннĕ енне:
Йăлтăртатрĕ çиçĕмле
Шурă пĕрчĕ çӳçĕмре...

Ах, атте, аттеçĕм, сан
Тĕксĕм çӳç пĕрчи юлман.
Мĕн чул каç, апла пулсан,
Эс, аттеçĕм, куç хупман?..

## АННЕНЕ

— Çĕрĕ витĕр мĕн курнать?..
— Эпир каяс çул курнать...

*Халăх юрринчен*

Çутă çĕрĕ, кĕмĕл çĕрĕ,
Ун çинче эрешлĕ тĕрĕ.
Çĕрĕ витĕр мĕн курнать?
Эсĕ килнĕ çул курнать.

Вырăсран чăвашалла,
Ырсемçи Нăрвашалла
Тăсăлать çав вăрăм çул,
Вăрăм çул, тумхахлă çул,
Эс, аннеçĕм, килнĕ çул.

Çутă çĕрĕ. Кĕмĕл çĕрĕ...
Асилӳ суран пек чĕрĕ:
Вăрçă, выçлăх... Паллашу...
Юрату... Сывпуллашу...

Кĕмĕл çĕрĕ, çутă çĕрĕ
Илеймен сар вырăс хĕрĕ.
Кĕмĕлсĕр салтак-атте
Сĕнеймен хитре тетте.

Ак, паян сан кĕмĕл туй —
Çич ачу тăваççĕ çуй.
Кĕмĕл çĕрĕ, çутă çĕрĕ
Çиччĕн тан сĕнеççĕ кĕррĕн.

Ĕçлекен ачу-пăчу
Пурлă, кĕмĕллĕ ку чух.
Вăй хураççĕ тĕнчере,
Тĕрлĕ-тĕрлĕ кĕтесре.

Пухăнчĕç тăван килне,
Аслă кĕмĕл туй тĕлне.
Туй тăваççĕ, çуй тăваççĕ,
Çуратнишĕн тав тăваççĕ.

Çутă çĕрĕ, кĕмĕл çĕрĕ,
Ун çинче эрешлĕ тĕрĕ.
Çĕрĕ витĕр мĕн курнать?
Эпир каяс çул курнать...

## СИРЕНЬ ТУРАЧĔ

Мĕншĕн кантăка эп уçрăм,
Мĕншĕн сирене эп хуçрăм?
Пĕр самантлăх киленме
Ма сӳнтертĕм илеме?..

Çеçкери сирень турачĕ
Кантăкран ирпе шаккатчĕ.
Пит ачашшăн та хитрен
Çупăрлатчĕ вăл питрен.

Тутлă шăршă сапалатчĕ,
Кашниех ăна саватчĕ.
Халь ларать пуçне усса,
Шурă куççульне тăкса.

Шур сиренĕн шур турачĕ
Кăкшăмра часах хуралчĕ.
Мĕншĕн хуçрăм сирене,
Ма амантрăм чĕрине?..

* * *

Сикрĕ тухрĕ шапа шывран,
Чăр! çеç пăхрĕ мана куçран.
Паллаймастăп сана терĕ пуль,
Хăнана килнĕскер терĕ пуль.

Хăнана килнĕ çав, хăнана,
Хăнара пурăнас пĕр кана.
Курас килчĕ тăван аппана,
Курас килчĕ тăван йыснана.

Курас килчĕ ачи-пăчине,
Курас килчĕ çуртне-пахчине...
Хăнана килнĕ çав, хăнана,
Çичĕ çул йыхравлаççĕ мана —
Ах, ямасть ытамран шур хула,

Ялан ĕмĕт юлать те юлать.
Паян илтĕм хама эп алла,
Тухрăм утрăм автовокзала...
Мĕн тери савăнать халь ман чун:
Мĕн тери ырă-ырă çак кун!
Утă çултăм йышпа улăхра,
Халь ларатăп кунта, пулăра.
Чăмпăлтатрăм тин çеç Сурăмра,
Сар хĕвел ачашлать çурăмран.
Шухăшсем хĕвĕшеç пуç тавра,
Юрă хыврăм ик-виçĕ çавра:
Юрлăп кĕçĕр касхи вăйăра.

## ПУШ УЙĂХĔ

Улыбкой ясною природа
Сквозь сон встречает утро года...

Тулта тăман. Вăл вайăн-шайăн
Шăлать мĕнпур çула-йĕре.
Çил такама кӳреннĕ майлăн
Йĕрет ӳпкевлĕн мăрьере.

Е вăл, вылянăн, ывçăн-ывçăн
Юрпа сапать ман кантăка.
Е пĕр кана шăпланнă хыççăн
Каллех юр — шур тусан тăкать.

Асать, урать усал çанталăк,
Мĕнле кăна-ши тулхăрмасть.
Урин! Пĕрех сив хĕл çулталăк
Ирне — çура тек чараймасть.

## ÇУ

Ман паян пӳрте кĕрес килмест тултан.
Уçă варкăш ӳсĕртет, çĕклет чуна.
Пăрăнса каллех, каллех утма çултан,
Çеремпе утатăп.
Чĕтренсе çунать
Қапан тĕпĕ шур тĕтреллĕ айлăмра.
Қарăнса алне сулать: Салам сана!—
Çу хĕвелĕ айĕнчи хавас йăмра.
Пăсланса выртать умра хура ана
Ешерен çурхи вăрман ытамĕнче...
Тин çуралнă ача пек сывлать тĕнче!..
Çуралать пуль çĕнĕрен кашни хăй чунĕнче —
Пурăнас килет, савас килет çу кунĕнче.
...Сăрт çинче тăратăп эп. Қула-кула
Чупрăм ăмăртса пĕлĕтсемпе.
Таравтлăн йăл! кулать шап-шур хула
Пĕрĕхсе тасатнă кантăкĕсемпе.

## ЙЎÇ УЛМА ХУЙХИПЕ ЁМЁЧЁ

Ăшă варкăш килчĕ вар-вар урлă,
Вĕреме пуçларĕ манăн юн.
Ķуçăм тинкерет пĕрех пит хурлă,
Шикленсе тапать каллех ман чун.

Ķăпăк евĕр çеçкесем кĕç çурăп —
Пыл хурчсем нăрлатĕç ман тавра.
Ķайăксем шăратĕç çепĕç юрă,
Ларăп эп çапла — хавас шавра.

Таврана саланĕ шăршăм ыррăн —
Вара васкĕç пурте ман пата.
Каччăпа хĕр уçăлмашкăн пырĕç —
Татĕç илĕç çепĕç турата.

«Улмисем пĕрех ун хытă, йўçĕ»,—
Тейĕç те пĕтерĕç йăлт хуçса.
Ķашни çул çапла!..
Пĕрех эп ўсĕп,
Шанчăк алăкне ярах уçса:
Пĕр-пĕр çу, тен, пĕр туратăм юлĕ,
Ларĕç улмасем кĕр çитиччен.
Сахăр пек вĕсем пит тутлă пулĕç.
Çийĕр, тус-йышсем, тăраниччен!..

* * *

Ҫаҫ
ҫырмари тӗтререн
чуста ҫăрать
васкаса...
Ывҫи-ывҫипе
сапать
ҫăмахӗсене
тӳпе ывăсӗ ҫине.

Ҫама кӗтет-ши хăнана?
Хăни кӗттерет...
Ак, ҫитрӗ!
Ҫутă аллипе илет,
пӗрерӗн-пӗрерӗн ҫиет
тӳпе ывăсӗ ҫинчи
ҫăмахсене-ҫăлтăрсене
ҫутă ир.

Анчах каҫ...
Ҫаҫ,
вăтанчăк хӗр пек,
тарать,
пытанать хăнинчен
йывăҫ хыҫне...

## ЧЕЧЕК

Ура
танкканă
хăй çулĕпе...
Сасартăк
Куç
курах кайнă
хитре чечеке...
Ем-ешĕл курăк хушшинче
пĕчĕк кăвайтăн
çуннă
çав чечек:
кĕрен çеçкисем,
çулăм евĕр,
кармашнă тавраналла...
Тăпах
чарăннă
Ура.
Алă
ĕмĕтсĕррĕн туртăннă
чечек патне
татмашкăн.
— Чарăн! Ан ашкăн!
Ан тат! —
кăшкăрнă
Чĕре.—
Унсăрăн
çак тавралăх
юлĕ чухăнланса,
кичемленсе.
Пирĕн хыççăн кунта килекенсем
киленеймĕç курса
çутçанталăкăн
çак тĕлĕнтермĕш
парнине...

Ăлă туртăннă
каялла...
Куç
айăплăн пăхнă айккинелле.
Ура
танккарă
малалла.

Чĕре,
Чĕре вара,
тапнă
хавассăн,
çĕкленӳллĕн...

* * *

Çуртăм çумĕнче
сăхманпа хупламалăх çĕрĕм пур.
Кăпкалатрăм ăна,
тăрăшса имлерĕм.
Акрăм унта
чечексем,
çимĕçсем.
Тупăш илес теместĕп.
Мĕн тупăшĕ унта?
Пĕр-ик кунтă çимĕçпе
пуçкăшăллĕх чечеке
йӳнĕ хакпах
пулĕ туянма
кĕркунне
пасарта.
Çĕр
уссăр ан выртттăр
терĕм.
Ун çинче
çумкурăк ан ашкăнтăр
терĕм.
Çĕр те
хĕрарăм пекех
çуратасшăн пуль
терĕм...

## ÇУЛЛАХИ ӲКЕРЧĔК

Шăп. Тĕлĕрет хăяхлă кӳлĕ
Хура вăрман ытамĕнче...
Çывран ача пекех иркӳлĕм
Пит канлĕ ытарми тĕнче.

Вăш çил вĕрет те кассăн-кассăн,
Хăях пуçлать юр юрлама:
«Хула шăв-шавĕнче ырсассăн,
Килсемĕр, тусăмсем, канма!»

## ХЫР

Куç виçейми шур юрлă хир.
Хир варринче — пĕчченçĕ хыр.
Çил çĕкленсен çиллес, кăра —
Асамлă парăс вăл карать.

Шутлать пуль: урнă тинĕсре
Вăл йывăр та хĕрӳ ĕçре.
Пиччĕшĕсен ĕретĕнче,
Хăватлă парăс айĕнче...

## ШАНЧӐК

Ҫанталӑк йӗрет. Салху сӑн-сӑпачӗ.
Такам кӳрентернӗ ӑна.
Хура кӗркунне мӗнпех-ши йӑпатӗ?—
Чӑнах, ҫутатмасть вӑл сӑна...

Эп йӗрес ҫук. Ялан ҫутӑ шанчӑк
Пырать вӑй хушса чӗрене.
Ан тив, пултӑр кӗр, курӑк шантӑр,
Ҫитмест унсӑр ҫут ҫуркунне.

## ӲКЕРЧӖК

Тин сунӑ сӗт пек шур тӗтре — сад ҫийӗ.
Тӗтрелӗхре хӗвел ахах тирет.
Шап-шур пӗркенчӗк уртнӑ улмуҫҫийӗ
Нарспи аппамӑра асилтерет...

* * *

Пас тытнӑран ҫап-ҫамрӑк йӑрӑс хурӑн
Асилтерет ҫураҫнӑ сар хӗре.
Пӗркенчӗк айӗнче ларать вӑл хурлӑн,
Шур куҫҫульне хуллен тӑкса ҫӗре.

Те иртнӗ ҫу кунне вӑл аса илнӗ?
Ӗмӗтӗнче кӗтет-ши такама?..
Ав, ун патне — ун тунсӑхне-ши сиснӗ?—
Ҫула каҫсаваскать яш хурама.

## ХЫРЛĂХ

*Г. Н. Волков* профессора

...Эп юмахра... Е тĕлленетĕп?..
Тавралăх шурă шăплăхра.
Пăхатăп та шалт! тĕлĕнетĕп:
Ларассĕ тарăн шухăшра
Сăваплă шухăшлавçă евĕр
Хырсем.
Мăнаçлă та ĕлккен.
Виç ĕмĕр шавĕ те кĕрлевĕ
Выртать юр айĕнче мĕлкен.
Пичет лартма хăймасть-мĕн вăхăт,—
Хырсем çап-çамрăк ĕмĕрех.

— Хырсем, мĕн-ма тĕреклĕ йăхăр?
Епле ем-ешĕл хĕмĕре
Упратăр?..

Чĕнмессĕ...
— Пурпĕрех эп пĕлĕп
Асамлă вăрттăнлăхăра...
...Тӳпе сенкер.
Ак ушкăн пĕлĕт
Чупать йыт кĕтӳ пек — хура...

Сӳпленчĕ çӳл тӳпе урайĕ...
Хĕвел сиçмест паçăрхилле.
Самант —
Хырсем шăлса хурассĕ,
Пуçĕсене силле-силле,
Вăрман хыçне пĕлĕтсене...
...Эп пĕлтĕм сăлтавне тинех...
Хырсем сар хĕвеле савассĕ...
Савакансем, çук, ватăлмассĕ!

# ЮРАТУПА КУРАЙМАНЛĂХ ПĔРТĂВАНСЕМ



* * *

Ку çуркунне каллех сан ятупа
Кěрлет, кěрет ман чунăм тěнчине.
Хуçаланса çапать ылтăн юпа,—
Чун анлăш вěççěртен,— чун варрине.
Ылтăн юпи çинче — йăх паллисем,—
Ятна тěрленě хěм саспаллисем.

* * *

Кěтменччě, пěлменччě, шанманччě —
Кěтрет умăма тухрě тăчě...
Кăвар кайăк пек ума апчě —
Кěтрет — юрату... Хěм — çуначě...

Кăвар кайăка ятăм тытрăм,
Анчах та ăçта ăна усрăп?..
Çут кěмěлшěн парăттăм тырă...
Ман хывăх та çук. Пуçа усрăм...

Çут кěмěлтен тăвăттăм читлěх,
Кăвар кайăка усрамашкăн...
Кěтрет-юрату хěвел питлěн
Калать: кирлě мар пуç усмашкăн.

Ӳпкевěм ман çук, тумăп айăп —
Эп сан чěрӳнте йăва çаврăп.
Тарассăм килсен,— ирěк кайăк!—
Темле читлěхрен те эп тарăп...

* * *

«...Вилчĕ...
тесех шутланăччĕ эп
ун пирки.
Епле киленсе
асаплантартăм эп ăна,
аманнăскере,
халтан кайнăскере.
Қатăркас пуç кăшăлĕ
тăхăнтартрăм пуçне.
Мĕн тери пушă та сивĕччĕ
унсăр
çак пысăк çĕр çинче,
печченччĕ эп
çынсен хушшинче.
Лараттăмччĕ
тырă кашлакан уйри
тунката евĕр...
Қĕçĕр тĕлĕкре куртăм эп ăна,—
çутă та илемлĕскер,
çăлтăр куçлăскер,
хĕвел питлĕскер,
пăхрĕ вăл кулса
ман çине...
Шартах сиксе вăрантăм.
Асаилӳ хумĕ килсе çапрĕ
чĕрене,
тумламĕсем,
чĕрĕ шыв пек
сирпĕнчĕç ун çине...
Вăл чĕрĕлчĕ,
чăннипех чĕрĕлчĕ.
Қаçарĕ-ши мана
чĕрĕлсе тăнă, асап тӳснĕ
ю р а т ă в ă м?!.

## ТАВРĂНУ

Ҫаллех, ак, таврăнтăм эп сан патна,
савниҫĕм,—
Хĕҫ ҫивчĕш ҫиййĕнчи вут-тĕнчене.
Кунта ӳсмест, пиҫмест ҫырла та иҫĕм —
Чун витĕр ялкăшать Хĕреслĕ ҫиҫĕм...

Ҫаллех, ак, таврăнтăм эп сан патна,
савниҫĕм.
Тарса каясшăнччĕ санран ют тĕнчене...
Анчах санпа ҫеҫ ҫивĕчĕ ман сисĕм.
Эс ҫеҫ ҫутатăн шухăш ĕнчине.

Ютра — ютла хама хам. Ĕмĕт пăрлă.
Ютрисемпе эп — эпĕ мар. Мĕлке.
Сана курсан ҫеҫ эпĕ йĕрĕп-юрлăп.
Санпа ҫеҫ ирĕлĕ чунри сĕлке.

Ҫаллех, ак, таврăнтăм эп сан патна,
савниҫĕм...

* * *

Ăçта, хăш тĕнчере çӳрерĕн эс, Юратăвăм?
Эп сансăр юлнăччĕ телейсĕр тăлăха.
Чунра лăпланнăччĕ ĕçтухăçлăхлă тăвăл.
Эс çуклă вăхăт иртрĕ кăлăхах.

Хĕрхентĕн-ши мана эс, ман Юратăвăм?
Каллех шаккатăн чун кантăкĕнчен...
...Эс çук чунра — çук сывлăш. Йӳçĕ. Тăвăр.
Эс пур чухне çеç çутă çут тĕнче.

Ярах уçатăп чунăм алăкне, Юратăвăм!
Кĕрсем, хуçа пул пушă хваттерте.
Ӳстер хевтеллĕн чун чечекĕ — сăвă,—
Куçар асапăма хавас терте...

Юратусăр поэт — хĕлхемсĕр, сӳннĕ ăвă...
Текех ан пăрахсам мана, Юратăвăм!!!

* * *

Савни, çĕнĕрен йăлт пуçлар...
Савни, çĕнĕрен паллашар...
Хальччен тунă йăнăшсене
Пăрса хăварар айккине.

Савни, хире-хирĕç утар.
Савни, тĕл пулсан, йăл кулар.
Шăраттăр шанманлăх пăрне
Чунри юрату — çуркунне.

Савни, эп ăнлантăм çакна...
Савни, ăнлансам эс çакна:
Санпа манăн çул — юнашар.
Утсан уйрăмшаррăн — типшар.

Савас тенипе савма çук.
Манас тенипе манма çук.
Савни, çĕнĕрен паллашар,
Савни, çĕнĕрен йăлт пуçлар —
Хальччен тунă йăнăшсене
Ţекех тăвар мар малашне...

* * *

Манăн пин алă пулнă пулсассăн,
Пинĕшпе те
Ыталанă пулăттăм
Сана.
Манăн пин чĕре пулнă пулсассăн.
Пинĕшне те
Парнеленĕ пулăттăм
Сана.

Манăн икĕ алă çеç,
Анчах вĕсемпе
Ыталама пултараймастăп эпĕ
Сана.
Манăн пĕр чĕре çеç —
Анчах ăна
Парнелеме пултараймастăп эпĕ
Сана.

* * *

Мĕн пулчĕ-ши?..
Ҫисренчĕ çут тĕнче!..
Эп — тĕкĕрччĕ.
Халь — ваннă кантăк.
Мăнкăмăллăхăн çӳл тӳпемĕнчен
Уру умне ӳксе эп вантăм...

* * *

Уçă çил кантăкран вирхĕнсе кĕчĕ терĕн-и эсĕ?
Васкаса чупса пытăн хупма кантăкна.
Ан васка! Ку çил мар.
Ку вăл — эпĕ!
Ку — эпĕ!
Çил пулса вĕçсе кĕтĕм эп халь сан патна.

Умăнти хутсене тытса ывăтрăм туххăм,
Арпаштартăм хивре шухăшун йĕркине.
Пӳлĕмрен каялла сисĕнми вĕçрĕм тухрăм
Сĕртĕнсе итлемен çӳç пайăркине.

Çуркунне таврара, çур кĕрлет, савнă тусăм!
Чупса тух хыçăмран! Тух чупса хăвăртрах!
Уй-хирте ешерет, вăй илет çамрăк уçăм.
Чечексем куçне уçнă хĕвеллĕ сăртра.

Çуркунне таврара, çур кĕрлет, савнă тусăм.
Çӳл тӳпе — сеп-сенкер янкăс чан!
Ыйхăран вăрансам, вăрансам, савнă тусăм,
Сар хĕвел чан çапать ян та ян!

* * *

Эс ман ҫине пӑхнӑ чух
Хӗвел шевлисемпе тулса ларатӑп...
Хӗвел энергиллӗ аккумулятор пек
Туятӑп эп хама хӑюллӑн, вӑйлӑн.
Пурне те хамӑн ӑшшӑма,
Хам ҫуттӑма, хавалӑма, телейӗме
Пайла-пайла парнелеме хавассӑн
эп ҫӳретӗп.
Темле-темле йывӑрлӑха та
Ҫӑмӑллӑнах эп ҫӗнтеретӗп.
Анчах энерги вӗҫсӗр мар —
Аккумулятор пушанать...
Хӗвелӗм,
Час-часрах пӑхсамччӗ
Ман ҫине...

* * *

Çиллес чухне куçу сивлек; сип-симĕс,
Ачашлăхпа тулли чухне — сенкер.
Сенкерлĕхре — чĕрем суранĕн имĕ —
Куçран пăхса чуна тинкер, тинкер!

Сип-симĕс е сенкер тӳпе-куççем
Мĕн пĕчĕкрен пурнатчĕç ĕмĕтре.
Мĕн чул хивре кунсем, пĕччен каççем!—
Сана тартса хупларĕ сĕм тĕтре...

Шăпа — шӳтлевçĕ!
Çунатсем çыхланнă...
Мĕн-ма сирет-ши тĕтрене уç çил?!.
Шутланăччĕ:
«Çав сăнара эп маннă...»
Алра пекехчĕ çут телей уççи...

Çиллес чухне куçу сивлек сип-симĕс...
Ачашлăхпа тулли чухне — сенкер.
Сенкерлĕхре ишет ман ĕмĕт-киммĕм,
Авăралла туртать ăна синкер...
Ан путчĕ, киммĕм!..

## ДИАГНОЗ

— Тухтăр, чĕре ыратать.
Палт-палт! тапать те чарăнса тăрать.
Унтан пăлтăр! пăлтăртатсах каять...
Вăй çук ал-урара.
Вилетĕп пулмалла...
— Ҫардиограмма кăтартнă тăрăх —
«Синусовая аритмия» —
Чĕрĕр сирĕн пĕр çемĕллĕн тапмасть.
Анчах ку «чире» тухтăр сыватмасть.
Эп çакна çеç калама пултаратăп:
Савăнăр!
Сирĕн, вăтăр иккĕри хĕрарăмăн,—
Вунçиччĕри чĕре!..

* * *

Хăратăп эп...
Эп халиччен нимрен те хăрамастăм...
Халь хăратăп.

Эс мана савса
Хăв чĕрӳне панăранпа —
Эп темрен те хăратăп.
Хамшăн мар,
Саншăн хăратăп.
Сан чĕрӳшĕн хăратăп.
Шартламара — шăнасран.
Пăчăра — пăчăхасран.
Йĕпере — йĕпенесрен,
Типĕре — типесрен...
Аçа çапасран,
Çулăм хыпасран...
Уйрăмах эп — вăрçăран хăратăп.
Вăрçă вăл —
Шартлама та, пăчă та, йĕпе те, типĕ те,
Аçа-çиçĕм те, çулăм та...
Вăрçă вăл — вилĕм...
Эп вăрçăран хăратăп.
Хамшăн мар,
Саншăн хăратăп,
Сан чĕрӳшĕн хăратăп...
Юратăва
Хăйсен чĕрисене шанса панă çынсемшĕн —
Хăратăп...

* * *

— Эс каллех çухатнă алсуна,—
Теттĕн эсĕ, аллăма тытса,—
Пăр пекех пӳрнӳ, ерет сунас,—
Теттĕн, сывлăшпа эс ăшăтса...

Ăшăтан пуль халĕ тепринне
Пăр пекех сип-сивĕ аллине.
Тен, калан пуль çак сăмахсенех,
Тĕлĕнсе пăхан пуль ун çине...

Ас илсен, эс маншăн ан хурлан,
Çухатмастăп ĕнтĕ алсана.
Ăчанни пек, хамăн çанăран
Хутăм çĕлесе эп халь ăна...

* * *

Кĕтнĕ чух — килмерĕн,
Савнă чух — савмарăн...
Халь: «Саватăп!» — терĕн...
Кăмăл çаврăнмарĕ.

Çунчĕ, çунчĕ ĕмĕт,—
Сӳнчĕ те кĕлленчĕ.
Юлашки хĕлхемĕ
Тĕлĕкре тĕлленчĕ...

## ХИРТИ СУКМАК

Ыраш хушшинчи сукмак
Чӗнет, йыхӑрать утма.
Утас килет ҫав сукмакпа.
Утас килет
Санпа.

Ыраш хушшинчи сукмак
Тухмасть асӑмран, тухмасть.
Утас килет ҫав сукмакпа.
Утас килет
Санпа.

Ыраш хушшинчи сукмак —
Тӗлӗкӗмри чӑн юмах.
Утатӑп эп ҫав сукмакпа
Тӗлӗкӗмре
Санпа.

Ыраш хушшинчи сукмак
Телей патне тухмаллах.
Утас килет ҫав сукмакпа.
Утас килет
Санпа!

* * *

Манăн пĕтĕм хурлăхшăн, асапшăн,
Тамăкри пек çуннăшăн,
Асамçăн,
Пӳлĕх парне пачĕ-ши вара?..
Эс, кĕтмен кĕтретĕм, ытамра...

Ним пирки те тек пăшăрханмастăп.
Куççульпе каç-каçăн çăвăнмастăп.
Чĕремре — ачашлăхăм тулли.
Питĕмре — юратăвăм кулли.

Эп сана саватăп пит хавассăн,
Уçă çил лăпканăн кассăн-кассăн
Ир çинче сар тулă пуссине —
Çупăрлатăп пиçĕ сăн-питне.

Эс мана хĕрӳллĕн юратнишĕн,
Чунăм суранне симпыл сĕрнишĕн,
Тав сана ман пĕтĕм чĕререн —
Хăв сипленĕ чĕрĕ хĕлхемрен.

* * *

Эс — манӑн Ҫӑлӑнӑҫ утравӗ.
Сассун ҫӑлкуҫ пек янӑравӗ
Сиплет кӗлленнӗ чӗрене,
Чӗртет ем-ешӗл ҫут хӗмне...

Эп — пуҫтах ӑслӑ ҫулҫӳревҫӗ —
Йӑлт халтан кайнӑ шух ишевҫӗ,
Хут карappa вут-тинӗсе
Хӑюллӑн тухнӑскер ишсе,
Хушка хумсен хаярлӑхне,
Ҫавраҫилсен ултавлӑхне
Тӳссе, чӑтса ӗшеннӗскер,
Ӗнсе, ҫунса кӗлленнӗскер,
Шанма, кӗтме те маннӑскер,
Сан ҫыранна ывтӑннӑскер...
Эс — манӑн Ҫӑлӑнӑҫ утравӗ...

* * *

Малашне
урасăр та
пултарăп эпĕ пурăнма:
çитес тенĕ çĕре
çитрĕм.

Малашне
куçсăр та
пултарăп эпĕ пурăнма:
курас тенĕ çынна
куртăм.

Малашне
алăсăр çеç
эп пултараймăп пурăнма:
туяс килет
сана
ялан
ытамăмра...

* * *

Тӗлпулуран тӗлпулуччен
Тӗртетӗп эп шухӑшсенчен
Асаилӳ катанпирне,
Тӗрлетӗп сӑвӑ ун ҫине —
Тӗлпулуран тӗлпулуччен.

Тӗлпулуран тӗлпулуччен
Хитре, черчен ӗмӗтсенчен
Тӗртетӗп савӑш кавирне,
Тӗрлетӗп сӑвӑ ун ҫине,
Тӗлпулуран тӗлпулуччен...

Мӗнле эс пурӑннӑ унччен?
Епле эп пурӑннӑ унччен?
Пӗрне-пӗри тӗл пуличчен,
Пӗрне-пӗри тӗл куриччен?
Тӗлпулуран тӗлпулуччен?..

* * *

Эпĕ
хамăн куçăма
ăмсанатăп:
вăл курнă
сана.

Эпĕ
хамăн тутама
ăмсанатăп:
вăл
чуптунă
сана.

Эпĕ
хамăн аллăма
ăмсанатăп:
вăл
ачашланă
сана.

Эпĕ
хама хам ăмсанатăп:
эс
мана
юратнăшăн.

* * *

Юрату —
телей вăл тетчĕç.
Ĕненместĕм:
Ма тесен
вăл маншăн пулнă
яланах —
асап.

Юрату —
асап вăл теççĕ.
Ĕненместĕп:
Ма тесен
вăл халĕ маншăн —
савăнăç,
телей!..

* * *

Çунса, асапланса кĕтни —
Ытамăмра.
Тата мĕн кирлĕ?
Ĕмĕтĕмри — халь чун савни!
Умра, çумра вăл каçлă-ирлĕ.
Анчах темме-çке кăкăрта
Чĕре тапмасть хавассăн, шуххăн,
Уҥчченхилле сикмест кăртах...
Вучах ăшши пулман-ши шухăш?!.

* * *

Ан шутла мана саврĕ тесе,—
Сансăрах савмалли çыннăм пур.
Ан шутла савтарасшăн тесе,—
Сансăрах савакан çыннăм пур.

Ҫантăкран уçă çил кĕнĕ пек,
Талпăнса кĕтĕн пурнăçăма.
Ҫантăк хупăп,— хама çĕнĕпех...
Хытарăп кăмăлăма.

* * *

Тытатăп та... сана манатăп акă...
Ун чух хăть юнлă куççульпе эс макăр,—
Шеллемĕп те хĕрхенмĕп эп сана,
Халь хăв эс шеллемен пекех мана.

Тытатăп та сана манатăп акă...
Вара каллех умри çул пулĕ такăр.
Чунра — хаваслăх. Кулă — пит çинче.
Каллех çап-çутă пулĕ çут тĕнче.

Тытатăп та манатăп ак сана!..
Анчах мĕнле-ши манмалла сана?..

* * *

Сана эп: «Çут хĕвелĕм!» — тенĕрен,
«Пуриншĕн те хĕвел эп!» — терĕн-ши?
Сана эп: «Уйăхăмçăм!» — тенĕрен,
«Пуриншĕн те эп уйăх!» — терĕн-ши?..

Кашнин хăйĕн хĕвелĕ,
Хăйĕн уйăхĕ.
Кашнин хăйĕн телейĕ,
Хăйĕн хуйăхĕ.

* * *

Кантăкран сăрханать кăвак çутă.
Вăранман-ха ăш ыйхăллă çуртăм.
Шăппăн-шăппăн пырса, кантăк уçрăм.
Чариех сарăлайрĕ ман куçăм.

Вăрман çийĕн — çиçеççĕ кĕреннĕ
(Суйрĕ тейĕн-и эс е ĕненĕн...)
Чечексем-пĕлĕтсем. Тĕлĕнтермĕш!
Кам чунне çак илем хĕмлентермĕ!

Кĕп-кĕренскерсене ман пухасчĕ,
Вĕсемпе сан умна ман тухасчĕ.
Яланхи пек васкавлăн эс иртмĕн,
Çумăмран. Ман çине пăхса илĕн...

Савăнса, вăрман çийĕн эп чупрăм.
Çил ачи, пуçтахскер, сикрĕ тухрĕ,
Ĕмĕте татрĕ ывăтрĕ туххăм.
Кĕлчечек çыххине тăпăлтарчĕ,
Тӳпене сапаларĕ те тарчĕ.
Вăрман çийĕн,— пухасшăн,— эп чупрăм.
Чупрăм, чупрăм та... Кантăка хупрăм...

## ЧУЛ ЧЕЧЕК

— Ăçта-ши, ăçта-ши, ăçта-ши
Эп курнă çак чул чечеке?
Мĕнле çĕршыври хăш ăста çын
Ăна касса тунă ĕлккен?..

Епле ун папакĕ черченкĕ —
Чĕп-чĕрĕ чечек евĕрех.
Мĕн хак вăл? Çĕр тенкĕ? Пин тенкĕ?..
Курсам: хапипе вăл — чĕрех.
— Ăçтан ăна тупрăн? Кам пачĕ?
Мĕнле унăн ячĕ, калаччĕ? —
Эс ыйтрăн хуллен, тĕлĕнсе,
Алри чечеке тĕллесе.

— Сана ытарми эп юратрăм —
Чĕрем чечек çурчĕ чечен.
Сана парнелес тесе татрăм,
Чулланчĕ те ларчĕ чечек...
Мĕн-ма? Эп пĕлместĕп çавна.
...Тен, туйрĕ вăл сан ултавна?..

## УЙĂХПИ

Сивĕ мана, кунсерен сивĕрех...
Ĕçнĕн чулпа йӳçĕхтернĕ эрех,
Шăм-шаккăм сурать, чĕрем ыратать —
Ыранхи кун юнаса хăратать...

Пурнăç каять, тарать ӳт-пӳрен...
Сивĕнчĕ шухăшăм — шух çулçӳрен.
Тухтăр пĕлмест эп мĕнпе чирлине,—
Тек им сĕнет йӳççине, тĕрлине...

Хам çеç пĕлетĕп мĕскер кирлине,
Сĕннĕччĕ эс юрату çырлине...
Эпĕ хĕрӳччĕ, эс хыт савнăран,
Халĕ, темме, эс манран пăрăнан.

Сивĕ мана, сивĕрех кунсерен,
Тусăм, санран пĕр хыпар килменрен.
Ыйхă тăсать çĕрлехи шăп хула.
Эп тинкереп уйăх çутнă çула.

Сив уйăх ыйтрĕ:
— Мĕскер эс, Сарпи,
Сар Хĕвелпиччĕ эс, халь — Уйăхпи...
Йăл-йăл кулмастăн, çӳретĕн хуллен,
Кив уйăх пек ирĕлетĕн куллен?..

— Ирĕкĕм çук савнине юратма,
Вăйăм та çук хăй евĕр манма.
Шух чĕреме чăрмалать йыт пекех
Суккăр та чунсăр, шеллевсĕр элек...

Чунăм тăрать çакăнса çип çинче,
Пурнăçăм пĕтрĕ ман çак çĕр çинче.
Уйăхăм, илтĕм пулсан сан ятна,
Кăшт шеллесем, илсем хăв патна!..

Ман йăлăну юлмарĕ ахаль,
Уйăх çинче пурăнатăп эп халь.
Çук, пулаймарĕ кунта та ману,
Тупрăм тата ытларах куляну.

Уйăх çутсан çĕрлехи таврана,
Эп кашни ҡаç куратăп сана.
Йывăр курма, эс епле теприне
Питĕ ачаш лăпкаса савнине.
Хупсам кантăкна!..

## ВĔРЕÇĔЛЕН

Ан шакка кантăкран,
Ан шакка!
Шаккасассăн — сикетĕп вакка...

Тимĕрпе картăм эп кантăка,—
Ан туях чунăмри антăха...
Çапса лартрăм пăта алăка,—
Ҡĕрейместĕн пĕрех. Ан лăска!
Тăрăшни-айланни ахалех...
Стена витĕр эс кĕтĕн пĕрех!..

* * *

Тӳпери хӗвелӗм ҫухалсан,
Пурӑнӑҫ ҫиппийӗ чӑлхансан,
Йыхӑртӑм сана хам патӑма,
Ҫалаҫса, чуна кӑшт пусарма.

Те илтмерӗн эпӗ чӗннине?
Пушатмарӑн вӑхӑт чӗлпӗрне.
Йӑл ҫиҫен Чапна хӑваласа,
Ҫумран иртрӗн кайрӑн васкаса.
Санпа мар калаҫрӑм — ятупа,
Хама хам йӑпатрӑм — сассупа.
Йӗркелерӗм пурнӑҫ ҫиппине,
Сар хӗвелӗм тухрӗ тӳпене!

...Хӗвелӳ сасартӑк ҫухалсан,
Пурӑнӑҫ ҫиппийӗ чӑлхансан,
Чӗн мана. Эп пырӑп сан патна,
Пулӑшӑп пухма вӑй-хӑватна.

* * *

Чунăм ыратăвĕнчен
Чĕнтĕр серепе çыхса,
Асамат кĕперĕнчен
Хутăм эп карăнтарса...

Ĕмĕтÿ — шап-шур чарлан
(Ултава, тен, вăл туйман),
Вĕçнĕскер ирĕклĕхре,
Халь ларать сĕм читлĕхре.

«Манăн, манăн, халь вăл ман —
Чунăм хĕпĕртерĕ ман.—
Маншăн пурăн эс, чарлан!
Ан хурлан, ан начарлан!..»

Пытăм пăхрăм ир çинче —
Куçĕ — сивĕ кĕленче.
Сăнарланнă ун çинче
Çÿл тÿпе, çурхи тĕнче...

* * *

«Вăхăт — тухтăр,— теççĕ,—
Сурана
Вăл сиплет...»
Ĕненĕттĕм кăна...
Иртрĕ хĕл, çур... Ак иртет çулла
Симĕс тутăрпа сулла-сулла.
Чунăмри суранăм пирчемест,
Тӳрленмест, сипленмест, ӳт илмест...

Хытăран хытăрах ыратать,
Чĕреме çуркалать-таткалать.
Вăхăт — тухтăр мар.
Ултав! Суя!
Эпĕ хам çунатăп, хам туяп!
Тĕлкĕшсе тăран чун суранне,
Чĕр суран çинех! — вăл тăварне
Ывăтать шеллевсĕр ывçипе,
Хăй кулса пăхать асап çине,
Пит çине хура тăмха хурать,
Нимĕнпе уямĕ ун çилли...
Вăхăт — ăнланман юратура —
Пуçкасан, хăрушă чунилли.

* * *

Çĕрле...
Сĕм-çĕрле...
Чуна вичкĕн тунсăх каснипе вăрантăм эп.
(Тĕлĕкре те эп сансăр тунсăхлатăп...)
Кантăк умне пырса лартăм.
Ларатăп ак,
Виçесĕр тунсăхра шуйханса.
Ларатăп пăхса кантăкран:
Ӳсĕр çын лăпăстатать урампа...
Хирĕçле çуртри пĕр кантăк çап-çутă...
Мĕншĕн хальччен те çывăрмаççĕ унта?
Тен, çак ӳсĕре кĕтеççĕ?
Тен, кăсăк кĕнеке тыткăнне лекнĕ пĕри?
Çемьере харкашу иксе тухнă-ши?..
Тен, ватă философ тĕнче пулăмĕ пирки
пуç ватать унта?..
Тен, чирлĕ ачи патĕнче амăшĕ ларать,
Куç хупмасăр ларать хуйхăрса?..
Эп пултаръăттăм ăна улăштарма...
Тен...
Тен, унта çутăсăр çывăрма хăрать такам?..
Мĕн чухлĕн куç хупмаççĕ-ши
Çутă кантăксем леш енче?..

* * *

Сердце,— как шагреневая кожа.
То, что тратишь, тратишь навсегда...

*Римма Казакова*

Юратупа нихçан та эпĕ выляман.
Сутакана — нихçан та каçарман.
Телейлĕ — каçарма пĕлекенсем.
Телейлĕ пулайма пĕлмест чĕрем.

Сутăнчăка перетĕп чĕререн кăкла-кăкла,
Пĕрлех перетĕп чĕрене — вакла-вакла...
Çук, çук! Чĕрем пĕчĕкленмест. Пысăкланать!
Унта халь çут тĕнче те вырнаçать.

Телейлĕ пулайма пĕлмест чĕрем...
Тĕнче хуйхи-суйхипеле хĕрем...

## САНА САВАТТĂМ...

*Я Вас любил...*
*А. С. Пушкин*

Сана саваттăм...
Питĕ чаплăн
Туйнатчĕ çутă сăнару...
Сана саваттăм эп асаплăн,
Ҫашни сывлам — çунса тăру.
Халь-халь тĕнче пĕтсе ларассăн
Туйнатчĕ эсĕ çук чухне.
Халь-халь чĕре чечек çурассăн
Туйнатчĕ эс умра чухне.
Сана саваттăм пăлханулллăн,
Иккĕленсе те ĕненсе,
Е — пит хавассăн, е — салхуллăн,
Элек юххисене çĕнсе.
Сана саваттăм хăрамасăр.
Шутлаттăм: Эс — ĕмĕрлĕхех.
Шанаттăм: Эс пурнаймăн мансăр,
Эп сансăр пурнайман пекех.
Сана саваттăм пĕр ўпкевсĕр,
Арçынлăхна сума суса.
Кĕвĕçўпе ултав-çўплевсĕр,
Тасалăхпа чуна çуса.
...Сана саваттăм вилесле!
Халь кураймастăп вилесле.
Тĕлĕнмелле...
Тем темелле?!.

## СИВЕНӲ

Я не люблю тебя. Страстей
И мук умчался прежний сон.

*М. Лермонтов*

Текех савмастăп эп сана,
Асапланмастăп çывраймасăр.
Тĕлĕкĕмре те сан сăнна
Курмастăп.
Пурĕпĕр-ха асăм
Усрать типтерлĕн сăнарна,—
Хăш чух çиçсе илет ĕлкиййĕ,
Çут пулă сикнĕн сив хум çийĕн,
Анчах...
Ăшăтаймасть чуна...

## ЮРАТУ

— Ăçта эс, Вуткайăк, ăçта?
Епле эс юрлаттăн ăста.
Çиçсе çывхарсамччĕ вăштах,
Чуна çутатсамччĕ кăштах.

Ăçта эс, Вуткайăк, ăçта
Упран ик çунатлă çутта?
Сар кун евĕрехчĕ каçсем —
Кунсем халь сĕм-тĕттĕм, кичем!

— Кунта эп! — килет вăйсăр сас.
Шалт! хытрăм. Тăрап аптраса.
Уç кантăк янахĕ çинче —
Тĕкне татнăскер...
Эй, тĕнче!..
— Эс кам?
— Эп — Вуткайăк.
— Ай-уй...
Ултавçă! Асси! Пит ан суй!..
— Суймастăп. Мĕн-ма халь суяс?
Шут тытрăм: санран уйрăлас.
Мана чĕрӳнте усрамарăн,
Улшуç куççенчен сыхламарăн...

* * *

Турăм сар сăпка
Янкăс кĕвĕрен...
Хутăм сăпкана
Хамăн ĕмĕте.
Çăлтăр çутинчен
Яврăм çут вĕрен,
Уйăх качинчен
Çакрăм пĕлĕте.

...Чăрсăр çил-элекçĕ пурпĕрех
Ывтăнтарчĕ ĕмĕте çĕре...

* * *

Эп пĕлсеччĕ,
Эс пĕлсеччĕ
Хамăр вăрттăнлăх çинчен.
(Ассенче саву кĕлечĕ...)
Ырри çук тĕнче пĕлсен.

Эп те савнă,
Эс те савнă
Пĕр-пĕрне тĕл пуличчен.
Туйăм хунавне юр авнă,
Хуçнă ĕмĕт туличчен...

Эс те тăлăх,
Эп те тăлăх
Пурăнсаччĕ халиччен...
Чун çине хурар-и сăлăп —
Каллех тăлăх юличчен?..

* * *

Çитмĕл те çичĕ тинĕс леш енче,
Çитмĕл те çичĕ сăрт-ту хысĕнче,
Çитмĕл те çичĕ кĕле-çăрапа
Питĕртĕм те хутăм эп халь Ăна.

Çитмĕл те çичĕ тинĕс урлă каçăпăр тетĕр-и?
Çитмĕл те çичĕ сăрт-тăва катăпăр тетĕр-и?
Çитмĕл те çичĕ çăрана ватăпăр тетĕр-и?
Тĕп тăвăпăр пурпĕр юратăвне тетĕр-и?
Çитмĕл те çичĕ тинĕсе тупаймăр —
Çитмĕл те çичĕ тинĕс урлă каçаймăр.
Çитмĕл те çичĕ сăрт-тăва тупаймăр —
Çитмĕл те çичĕ сăрт-тăва катаймăр.
Çитмĕл те çичĕ çăрана тупаймăр —
Çитмĕл те çичĕ çăрана ватаймăр!

Вĕсем ман чĕрен чи тĕпĕнче.
Унта сирĕншĕн çул çук.
Унта урăх тĕнче.

* * *

Хĕçпе эп çӳретĕп, хĕçпе —
Чуна эсĕ каснă хĕçпе...
Çӳретĕп-куматăп паян.
Янрать чĕремре çурăк чан.
Янрать-йыхравлать чан кĕлле...
Чунра — вĕçсĕр-хĕрсĕр хĕлле:
Утаççĕ кĕрт тăрăх çарран
(Хура кĕписем çĕр таран)
Пуçне уснă халсăр çынсем...
Çынсем мар-çке! Ман ĕмĕтсем
Çӳреççĕ сив юр-кĕрт ашса,
Сенкер çеçпĕлсем шыраса...
Шутлаççĕ: тен, пулĕ кĕтрет?!
Тен, çĕнĕрен йăл илет
Хура тупăкра выртакан,
Кăкри çине çеçпĕл хурсан...
Эй-ей! Айвансем! Сив хĕлле
Ӳстермĕ ачаш çеçпĕле...
Хура тупăкра выртакан —
Мана вăй парса тăракан
Юратăвăм...
Ăна халь текех чĕртме çук...
Сăртсем хыçĕнче ăшă çур...
Чунра — вĕçсĕр-хĕрсĕр хĕлле...
Чанлать-йыхравлать чан кĕлле.
Чанлать чĕремре çурăк чан.
Çӳретĕп-куматăп паян
Чуна эсĕ каснă хĕçпе,
Хĕçпе эп çӳретĕп, хĕçпе...

* * *

Юлашки тумлам — бомба евĕр!..
Таталчĕ
Чăтăмлăх пĕви...
Ĕмĕтсен-кермемсен тĕп хули —
Кӳренӳ хумĕсен айĕнче.
Пĕвери юшкăнра
Чуна çурасла
Кваклатать
Шапа,
Чармак куçлăскер,
Ку — ӳкĕнӳ...

* * *

Мĕнле илемлĕ те ĕлккен вăл —
сан юратăву —
ывăçри
хĕвел шевлиллĕ
тăп-тăрă шыв пек!
Чылайччен килентĕм эп унпа.
Йышăнас
е
йышăнас мар? —
шутларăм
ир те каç...
Çав вăхăтра
таçта çĕтнĕ вăл —
сан юратăву —
пӳрнесем хушшипе сăрхăнса пĕтнĕ
шыв пек...

* * *

Аллăма кăранташ тыттарсан,
Туйăма ўкермешкĕн ыйтсан,
Мĕн ўкерĕп-ха эп?..
Чулланнă тăвăл ўкерĕп...

* * *

Телейлĕн юратма пĕлместĕп...
Ырату çеç юратуран:
Чуна вут-хĕскĕчпе хĕсет те
Ваклать анчах турам-турам.

Кашни турамĕ — çĕнĕ сăвă —
Парне юратнă халăха...
Чун вырăнне юлсассăн хăвăл?..
Тен, ман асапăм кăлăхах?..

— Çук, кăлăх мар! —
Туссем калаççĕ,—
Кĕтетпĕр çĕнĕ сăввуна!..
Ман кăмăл-туйăм — тимĕрç лаçĕ,
Çунтарăп вуттинче чуна.
Çуралнă эпĕ юратма,
Çуралнă сăвă шăратма.

* * *

Ҫăвар ҫинче ташлатăп...
Ҫěленле авкаланса,
Сиксе ташлатăп.
Ҫулатăп эп,
ташланă май,
ахăлтатса,
ěсěклесе кулатăп.
«Ҫулать-ҫке, ыратмасть эппин»,
тесе,
кăвар ҫине
тип шанкă пăрахатăн...
...Куҫҫулěм типнěрен —
кулатăп эп...
Ырату
чун тěпěнче
кěвелсе ларнăран —
кулатăп...
Ташлатăп та
кулатăп...
Сӳнсе пыракан
вут-юратăвăмăрăн
кăварěнче
ТАШЛАТĂП!..

* * *

...Пат ...пат ...пат...
Юн тумлать —
Касрăм пӳрнене çĕçĕпе.
Пат... пат... пат...
Юн тумлать...
Тытам-и, çыхам-и
Çĕтĕкпе?..
Пат... пат... пат...
Юн тумлать...
Юхтăрин пĕр тумлам юлмиччен,
Пĕттĕрин тĕппипех пĕтиччен
Юнăм —
Санпа наркăмăшланнă юнăм...

## САНПА ЭПИР

Килчĕ телей — унпа тату пулаймарăмăр.
Çитрĕ инкек — çĕнме вăй-хал тупаймарăмăр.
Çут юрату çурхи Атăл пек ейӳ сарчĕ —
Çав юхăмра ишме пĕлеймерĕмĕр.
Ĕмĕт çич тĕслĕ кĕпер карăнтарчĕ —
Ун тăрăх саву тĕнчине кĕреймерĕмĕр...
Каç выртатпăр,
                    çĕр çывăратпăр, ир тăратпăр —
Пурăнатпăр...
Пурнăç-и ку?
Пурнăç мар — ăнланатпăр...
Анчах
чăн пурнăçпа пурăнма ăнтăлмастпăр...

* * *

Как ты — так я.
Твое тебе верну.

*Римма Казакова*

Эс епле — эп те çаплах.
Санăнне санах эп парăп...
Куççульне шăлса ятлах —
Асамат кĕперĕ карăп,
Сар хĕвеллĕн йăл кулса.

Эп ун тăрăх утса кайăп,
Аллăмпа сана сулса...
Чун-чĕреçĕм, ирĕк кайăк,
Ларнăччĕ аллу çине.
Хакламарăн, васкамарăн,

Читлĕхне хупма тăхтарăн...
Лар пăхса халь тӳпене...

* * *

Мĕн пирки тĕксĕмленчĕ сасартăк тĕнче?..
Мĕн пирки тĕссĕрленчĕ сасартăк тĕнче?..
Мĕн пирки?!.
Хĕвел анса ларчĕ-и çӳл ту хыçне?
Вупăр кăшлать-и сар уйăх пуçне?..
Мĕн пирки?..
Ăнлантăм тинех...
Мăнаçлăхăм вупăр пек
Кăшлать юратăвăма.
Мăнаçлăхăм вупăр пек
Пăвать юратăвăма:
«Хăйне евĕрлине
çуратма пултарайман
Тивĕç мар пурăнма!..»
Мăнаçлăхăм вупăр пек
Кăшлать юратăвăма.
Мăнаçлăхăм вупăр пек
Пăвать юратăвăма...

* * *

— Пĕр тумлам çеç
парсам...
Пĕр пĕчĕкçĕ тумлам!..—
кĕленчĕ, йĕчĕ манăн чун,
вутра хыпса çунакансккер,
пăхса
сенкер-сенкер куçун
тулли те тĕпсĕр кӳллине...

...Пички-пички, катки-катки
чĕрĕлĕх шывĕ халь сĕнетĕн...
Усси пулайĕ-ши халь тин?..
Кĕлленнĕ
пуш-пушă ман чун
çӳрет хавассăр ман тавра,
пĕччен,
сип-сивĕ уйăх пек...

* * *

...Ярса пусрăм пĕр утăм сан патна —
Ывтăнтăм ... таçти тамашана...
Хушшăмăрта халь — пин-пин çутă çулĕ.
Ăна епле, мĕнпе кĕскетме пулĕ?..
Ăçти галактикăра эпĕ халь?..
Тĕтре, тĕтре, тĕтре... Çук ман вăй-хал.
Тĕтре витĕр пăхать такам кулса.
Те эсĕ?..
Те эс мар?..
Алне сулса
Тем кăшкăрать... Ку — эсĕ мар.
Ку — анти-эс...
Эп вара кам?
Тен, эп те эпĕ мар?..
Тен, саншăн эпĕ мар, тен, анти-эп çунап?
Тен, шăпама эп мар, тен, анти-эп юнап?..
Çапла...
Эпĕ — эпĕ мар. Эс те — эс мар.
Эпир хамăрах хамăр пулнă пулсан,
Тĕнчен юрату саккунне пăхăнса,
Пĕр-пĕрне хирĕç утмалла...
Пĕр ытамра пулмалла...
Пирĕн хушăра халь — пин-пин çутă çулĕ.
Çак хушă ĕмĕр-ĕмĕр юлĕ...
Антитĕнче — хăравçăсен тĕнчи.
Антитĕнчере çиçмест телей ĕнчи...

* * *

О честолюбец...
Люблю честолюбцев!..

*(Çурса тăкнă çырăвăмран)*

О, мăнаç арçыннăм!..
Мăнаçлăхшăн саватăп сана.
Хăйне юратман,
Хăйне чыс туман этем —
Этем-и?..

О, мăнаç арçыннăм!...
Мăнаçлăхшăн хурлатăп сана.
Çынна юратман,
Çынна чыс туман этем —
Этем-и?..

* * *

Санран мĕнле каяс-ши уйрăлса?..—
Шутлатăп та, чĕреçĕм çурăлать.
Санран мĕнле каяс-ши уйрăлса? —
Шутлатăп та, куç-пуçăм хуралать.

Вăхăтваскать, чупать хăй юрттипе,
Тытса чараймăн чĕн тилхепепе.
Сывпуллашу саманчĕ çывхарать —
Мĕнле каяс-ши уйрăлса санран?

Санпа пулма пӳрмен мана шăпа,
Йĕретĕп эп, савниçĕм, ан йăпат...
Лăпланĕ чун, йĕрсессĕн татăлса,—
Епле санран каяс-ши уйрăлса?

Чăпар утсем тăраççĕ ташласа —
Чĕвен тăрса кĕтеççĕ ларасса.
Кĕçенӳпе урам хушши янрать —
Мĕнле каяс-ши уйрăлса санран?

...Сыв пул, савни, сыв пул, ман каймалла,
Тен, таврăнма май килмĕ каялла.
Хăть мĕн тăвам, тухас пулать çула,
Каятăп эп, чĕрем кунтах юлать.

* * *

Çапла, эп — ăсран тайăлнăскер.
Сана савса,
Саншăн çунса,
Ăсран тайăлнăскер:
Шартламара — чечек çуратăп.
Пуш вырăнта — кермен куратăп.
Шыв хĕрринче — типсе вилетĕп.
Вилме кайса — пуйса килетĕп...
Пуянлăхăм — ыратăвăм,
Ыратăвăм — юратăвăм.
Ман пек пуян тата кам пур?
Ĕненмесессĕн акă кур:
Қашни тумлам куççулĕм — ĕнчĕ.
Çӳл тӳпери мăн пĕлĕт — енчĕк.
Çав енчĕкре усратăп ĕнтĕ
Мĕльярд шăрçаллă куççуль-ĕнчĕ...
Ққăмăлу пур-и,
　　　　　　　　ĕнчĕ-çумăр çутарăп?
Ққăмăлу пур-и, ĕнчĕ айне путарăп?

Ман пек пуян тата кам пур?
Шутлатăн эс: çăвать шур юр...
Юр мар ку — манăн чун юрри
Юр пек пулса выртать юри.
Эс ун çинчен пĕлейтĕр тет.
Чун юррине эс илттĕр тет.
Пусмассерен шур юр çине,
Кĕвви янрать çине-çинех.
Илтетĕн-и?
Туятăн-и?
Юррăмпала пуятăн-и?
Пуянлăхăм — чĕрем тулли.
Пуянлăхăм — йăлт сан валли.

Çапла, эп, ăсран тайăлнăскер,
Сана савса,
Саншăн çунса,
Ăсран тайăлнăскер:
Тавра çулпа утса ыратăп...
Çĕр варринче — хĕвел шыратăп...
Телей сĕнсен — асап ыйтатăп...
Ыратăва ялан мухтатăп...

...Анчах та эпĕ, ăссăрскер, пулман пулсан,
Пурнăçу мĕн тери чухăн пулатчĕ сан...

...Ман евĕр ăссăрсемсĕр çĕр çинче,
Мĕн тери тĕссĕрленĕччĕ тĕнче...

* * *

...Шевлерен кермен эп купаларăм
Сывлăшра. Çич пĕлĕт леш енче.
Пĕлĕтсем çӳреççĕ ярăм-ярăм
Çав керменĕн пусмисем çинче.

Пĕчченех унта эп пурăнатăп,
Итлесе Вуткайăк юррине.
Тен, сана айванăн курăнатăп?..
Килĕн, тен, керменĕн çуттине?..

Сан валли шевле-пусма антармăп.
Пусма тăрăх хăпарма — ансат.
Çакна çеç эп калама пултарăп:
Юратсан, этем хушать çунат...

Эс çырлалăхра çӳренĕ чух, савниçĕм,
Эп чечек çурма та ĕлкĕрмен...
...Пĕлĕт айĕн — вутлă-хĕмлĕ çиçĕм...
Пĕлĕт çийĕн — сывлăшри кермен...

* * *

О, хаклă çыннăм,
савнă çыннăм,
ăслă çыннăм!

Чĕремĕн пыл шăршиллĕ çаранне
Кĕмерĕн илĕртӳшĕн-иленӳшĕн...
Чĕремĕмри чечен çеçке-чечексене
Татмарăн пĕр самантлăх киленӳшĕн,
Ачапчалла айваннăн, выляса,
Ватмарăн таптаса, лутăркаса.
Ăнлантăн ку Чĕре тухăçлине,
Вăл пысăк Телее тивĕçлине.
Асамçă пек ăстан ăрăмласа,
Сенкер хĕвелӳпе чуна çутса,
Ачаш шевлӳсемпе çупăрласа,
Инкек-синкексенчен хупăрласа,
Пыл хурчĕ пек эс тăрăшрăн куллен,
Имлерĕн чĕреме самантсерен:
Тĕвĕлентертĕн Ĕмĕт папкине,
Пĕтĕлентертĕн Шухăш çеçкине...
...Пиçи-пиçми çырласене, ыр çыннăм,
Хыпса çăтмарăн выççăн, васкаваррăн.
Эс кĕтрĕн чăтăмлăн,
Патваррăн —
Çырла сĕткен пухассине,
Хĕвел питне тухассине.
Чĕрем çаранĕнче —
Курать тĕнче! —
Нар пек хĕп-хĕрлĕ çырласем çиçеççĕ —
Асамçă-савнине кĕтеççĕ!
Пуçтар ырла-ырла!
Асту:
пиçсе иртсен, çĕрет
çырла...

* * *

Ма ӳпкелен —
Чӗрем чечекӗ ёлкӗреймерӗ ҫурӑлса,
Эс — пурнӑҫ тӳпинчи хӗвелӗм —
Хӗмленнӗ чух йӑл-йӑлкӑшса.

Ма ӳпкелем —
Чӗрем чечекӗ ҫеҫке халь ҫурчӗ талкӑшса,
Анчах эс — хӗм тӑкан хӗвелӗм —
Ҫухалтӑн, анӑҫа анса...

* * *

Кӗрен кусӑх тӑхӑнманччӗ —
Пӗрех
Кӗрен тӗслӗн курӑнатчӗ тӗнче —
Сана савнӑран чӗрем.

Хура кусӑх тӑхӑнман халь —
Пӗрех
Хура тӗслӗн курӑнать тӗнче —
Ҫунса пӗтнӗрен чӗрем...

## ПАЛĂК

Туйăмăмсен пьедесталĕ çинче
Çĕклерĕм сана çут тĕнче умĕнче.
Ах, епле палăк хĕвел айĕнче,
Çак сылăхлă-сылăхлă çĕр çийĕнче!..

Çĕршер-çĕршер, пиншер-пиншер çултан
Тĕлĕнсе ахлатĕçĕ унтан.
Ăнланĕç-ши — çав пьедестал çине
Мĕлке çеç тăнине?..

* * *

Чунсăрри чунсăррине хăртать:
— Эс — чунсăр!
Чунсăрри чунсăррине хурлать:
— Эс — чунсăр!
Ăнланмаççĕ (те ăнланасшăн та мар!)
айвансем —
Иккĕшĕ те чунсăр хăйсем.

* * *

Эп пĕр çын мар.
Эп хам — пин-пин!

*Çеçпĕл Мишши*

Шухăшпа-сăнчăрпа
Сан çумна хама хам
Сăнчăрларăм.
Ир те каç,
Ир те каç
Сан çинчен çеç
Юрларăм.

Пит пылакчĕ чуралăх —
Мĕн каласси?
Ир те каç,
Ир те каç
Хăлхара —
Савниçĕм сасси.

Ир те каç,
Ир те каç
Умăмра —
Савниçĕм кулли.
Ир те каç, ир те каç
Чунăмра —
Телей туп-тулли.

...Паян лăнчăр-лăнчăр
Ишĕлчĕ сăнчăр!
Чарăлчĕ куçăм —
Усăнчĕ пуçăм...
Чĕтрет чĕркуççи —
Суялăх! Суялăх!
Чĕреçĕм хуçи —
Тăмасть сурмалăх!
Гарем — ун чĕри!
Эп — пинрен пĕри?!.

* * *

Вилетĕп эп...
Выçăпа пулсан —
тупăнатчех
ырă чунлă çын,
парĕччĕ
чĕре сурилĕх çăкăр.

Вилетĕп эп...
Типес пулсан —
тупăнатчех
ырă чунлă çын,
парĕччĕ
пĕр сыпкăм шыв.

Вилетĕп эп...
Саншăн çунса...

* * *

Парӑр мана ҫунатӑма!..
Пултараймастӑп тек чӑтма...
Эп кайӑп, кайӑп, кайӑп, кайӑп
Саркайӑкӑн вӗҫсе,
Сенкерлӗхе ӗҫсе,
Ҫич пӗлӗт леш енне...
Тек килмӗп ҫӗр ҫине!

Ҫылӑхлӑ тутӑрсемпе —
Кулӑрах манран.
Ҫылӑхлӑ ӳтӗрсемпе —
Тухӑрах ҫынран.
Мана пӗрех!
Мана пӗрех!..
Чӗрем, йӗрех, йӗрех.
Йӗр те савӑн!

Кӑйкӑр евӗр сенкерлӗхре эс явӑн!
Савӑн!

Санпа эпир курнине — кураяс ҫук вӗсем.
Санпа эпир илтнине — илтеес ҫук вӗсем.
Санпа эпир туйнине — туяяс ҫук вӗсем.
Санпа эпир ҫитес ҫӗре — ҫитеес ҫук вӗсем.

* * *

Ман ĕмĕт тӳпине, хĕвел пулса,
Эс тухрăн ярăнса, йăл-йăл кулса.
Хевтеллĕн илĕртрĕн пулма тату,
Сĕнейрĕн ăшă, çутă юрату.

Сан патналла, çӳллĕлĕхе çул тытрăм эпĕ.
Хăпартăм шевлӳ тăрăх, хăрамасăр.
Мĕнле хĕрӳллĕ эс, кулатăн епле çепĕç!
Йĕретĕп савăнса, ытараймасăр...

Часах эп пулăп санăн умăнта...
Часах сана эп пăхăп куçунтан...
Часах, часах...
Хĕвелĕм, эс çухалтăн,—
Мăн пĕлĕтсем хыçне тарса пытантăн...

## САНА МАНАС ТЕСЕ...

Сана манас тесе,
Мĕскер тăвас-ши, тусăмçăм?
Мĕн-ма ялан сана анчах шырать-ши куçăмçăм?

Манас тетĕп те, ах, манаймастăп.
Сана манаймастăп.
Ах турах та, ай тур-тур, манаймастăп.

Сана манас тесе,
Тăван çĕршывăмран уйрăлтăм,
Инçе çĕрсенче çӳресе хăшкăлтăм-хăврăлтăм.

Манас терĕм те, ах, манаймарăм.
Сана манаймарăм.
Ах турах та, ай тур-тур, манаймарăм.

Сана манас тесе,
Чи йывăр ĕçе кӳлĕнтĕм,
Такăна-такăна ӳксе, сывлăшсăр пӳлĕнтĕм.

Манас терĕм те, ах, манаймарăм,
Сана манаймарăм,
Ах турах та, ай тур-тур, манаймарăм.

Сана манас тесе,
Мĕскер тăвас-ши, тусăмçăм,
Мĕн-ма санпа пĕрле пулма пӳрмен-ши,
туррăмçăм!..

Манас тетĕп, ах, манаймастăп,
Сана манаймастăп,
Ах турах та, ай тур-тур, манаймастăп.

* * *

Эп сансӑр пурӑнма вӗрентӗм.
Эс ҫуккине тӗпрен ӗнентӗм.
...Саватӑп ҫутӑ уйӑха.
Ырлатӑп тутлӑ ыйӑха.

Эп сансӑр пурӑнма вӗрентӗм.
Йӑлт улшӑнтӑм. Тӗпрен ҫӗнелтӗм.
..Саватӑп сарӑ хӗвеле,
Сар кил ҫинчен халь кӗвӗлеп.

Эп сансӑр пурӑнма вӗрентӗм...
Шуранкаран каллех хӗрелтӗм...
Манса эс чӗртнӗ хӗн-хура,
Мухтатӑп ҫӗнӗ шур юра...

Эп сансӑр пурӑнма вӗрентӗм.
Анчах паян сана тӗллентӗм...
Ҫаллех ҫухатрӑм ыйӑха...
Ҫаллех эп путрӑм хуйӑха...

* * *

— Тав сана!
— Сав мана!

*Кĕрекере çапла калать чăваш*

Тĕппипех ĕçрĕм,
тĕппипех
мăшкăлпа кӳренӳ куркине...
Ĕçрĕм те...
Çĕр çине
çавăрса çапрăм ак,
чăл-парах
ванчĕ вăл,
чăл-парах!
Телее теççĕ савăт ванни...
Телее пултăрах —
Чун савни,
Ыр курах!..

* * *

Чалт-чалт хěм сапатчě чун-вутчуль,
Сан патна хываттăм эп вут-çул...
Эс ăна сисмен-туйман та пуль:
Тамăк-асапраччě ман кун-çул...
Ун чухне тăкаттăмччě куççуль,
Ылханса асаплă вутăма...
Куççулěмпе тулнă Куççулькӳл
Шăваратчě Çилçунатăма.
Çав асап — юрату пулнă пуль...
Çав асап вăл — телей пулнă пуль...

Ěнтě хěмсěр чунăм — арманчуль,
Сан патна эп хывнă вутлă çул
Вăхăт кěлěпе витěнчě пуль,
Кěллěн-кěллěн шупкалать кун-çул.
Халě ак тăкатăп эп куççуль,
Ăмсанса асаплă вутăма...
Куççулěмпе тулнă Куççулькӳл
Шăварать çěн Çилçунатăма...
Çав асап — юрату пулнă пуль...
Çав асап вăл — телей пулнă пуль...

* * *

Эс ăсма пĕлменшĕн — айăпăм ман çук.
Ăсма пĕлекен ăсать
Эс «Типнĕ» тенĕ пусăран
Витри-витрипе
Тăп-тăрă,
шерпет пек пылак,
çунат хушакан,
ăсран яракан
асамлă
чĕрĕлĕх шывĕ...

Эс ăсма пĕлменшĕн — айăпăм ман çук...

* * *

Юрату çуралман-ха.
Вăл кĕç-вĕç çуралмалла!..
...Ăна кĕтсе,
ун ячĕпе
эп ĕнтĕ хыврăм
хӳхлев...
Хăçан,
хăш вăхăтран
тивĕ-ши ăна хӳхлеме?..
Мĕн тери хӳхлессĕм килмест...
Хывас килет,
юрлас килет ун ячĕпе
сăпка юрри
ĕмĕрĕпех...

* * *

Путакан
улăм пĕрчинчен ярса тытнăн
ярса тытрĕç
сан сăнарна
туйăмсăрлăх тинĕсĕнче путакан
туйăмăмсем.
Çăлăнĕç-ши вĕсем?
Çăлăнаймĕç-ши?..

Самантсерен
парăс хыççăн парăс карать
çывхарса килекен
ĕмĕт карап.
Сăрлĕ-ши парăссене
кĕрен тĕспе
чунăм тĕнчине чĕремрен шăранса
тухакан
хĕвел-юрату?..

* * *

Çак пĕчĕк планета çинче
Вырăн пур:
Вăрлама та,
Çаратма та,
Вĕлерме те...

Çак пысăк планета çинче
Вырăн çук:
Пирĕн юратуллă чунсене
Тĕл пулма...

* * *

Çуркунне хăçан çитесси
хамăртан çеç килет...

*Телефонпа калаçнинчен*

Кĕркуннерен тӳрех пуçланчĕ çур.
Хĕл сиввине туймасть савуллă чунăм.
Çӳл тӳперен ӳкет сип-симĕс юр...
Кас сĕмлĕхне сирет сап-сарă кунăм.

Паян тултартăм эп ик хут вунтăххăр...
Таçта çулсемĕн иккĕмĕш çурри...
Çулсем, ан васкăр пусармашкăн, тăхтăр!
Чунра янрать Çĕн юрату юрри.

Тĕнчем паян хĕвеллĕ, çут шевлеллĕ —
Хуçа — хăнаçăм Юрату турри.
Ун еккипе çап-çамрăк эп, телейлĕ!
Текех эп пулмăп сивĕ хĕл хурри.

Çĕн хăватпа вĕрет-кĕрлет ман юнăм,
Çăвать, хĕвет хĕвеллĕ симĕс юр...
Хĕл сиввине сисмест савуллă чунăм.
Кĕркуннерен тӳрех пуçланчĕ çур...

* * *

Тӗлӗнеҫҫӗ аптраса синоптиксем:
Ӑҫта ҫӗтнӗ кӑҫалхи хӗл сиввисем?
Вӗлкӗшеҫҫӗ таврара хавас ҫилсем —
Ҫур пике лашин ҫилхийӗсем.

Тӗлӗнеҫҫӗ аптраса шурсухалсем:
Мӗншӗн шӑранаҫҫӗ хӗллехи кунсем?
Нихӑҫан курман кун пеккине —
Хӗлсӗрех ҫур кунӗ килнине...

Эпир иксӗмӗр пӗлетпӗр мӗншӗнне:
Пирӗн чӗрере — хӗвеллӗ ҫуркунне.
Пирӗн юрату хӗлхемӗсем
Тӗнчене кӳреҫ ҫурхи илем.

* * *

Эс алӑ султӑн, султӑн, султӑн...
Йӑвашшӑн, айӑплӑн эс култӑн...
Инҫетлӗхре эс юлтӑн, юлтӑн...
Ӗҫех ак курӑнми те пултӑн...

Эп алӑ султӑм, султӑм, султӑм...
Куҫҫулӗм витӗр култӑм, култӑм...
Санпаччӗ — тӑлӑха ак юлтӑм...
Хурлӑхӑмпа акам эп пултӑм...

* * *

...Вăрлаççĕ, вăрлаççĕ, вăрлаççĕ...
Çĕршер, пинщер, миллионшар, миллиардшар...
Вăрлаççĕ те — çакланмаççĕ...
Мана пуянлăх кирлĕ мар...
...Нивушлĕ санпа иксĕмĕр

вăрлаймăпăр
ик-виç минут Вĕççĕрлĕхрен —
пĕрне-пĕри пăхмашкăн куççенчен...
Сисес те çук-çке Вĕççĕрлĕх
çухатăвне —
мĕн тери пуян вăл!—
вĕççĕр-хĕрсĕр...

...Вăрăсене эп ăмсанатăп —
намăсне çĕлесе лартнă вĕсенне
тем хулăнăш кĕççе-михĕсене...

* * *

Мăйлатаççĕ,
нăйлатаççĕ
михĕри кушак çурисем —
шуррисем, хурисем —
тин çуралнăскерсем,
сĕм-суккăрскерсем.
Курмасăрах кун çути,
туймасăрах сĕт тути,
пĕтме суннăскерсем —
мĕскĕнскерсем.
Эпир пултарăттăмăр çăлма вĕсене,
туртса илĕттĕмĕр-и чунсăрсен миххине,
укçа парăттăмăр-и — чунсăрсене —
кушак çурисен хуçисене.
Эпир, суккăр кушак çурисен туррисем —
хамăр та лару-тăру чурисем.
Лару-тăру аллинче —
эпир хамăр та —
суккăр кушак çурисем...

...Атя, кушак çурисене çăлар...

* * *

Аллӑмра парнӳ сан — пӗчӗк медальон.
Пӑлханать-вӗрет хӗмленнӗ манӑн юн.
Асилӳ куççулӗ чунӑма çурать.
Асапа манне пӗр Турӑ çеç курать.
Пин-пин сивӗ çухрӑм пирӗн хушӑра.
Уйӑрчӗ шӑпамӑр шелсӗррӗн,
Кӑра
Пурнӑç çаврaçилӗ вӑрчӗ ик енне...
Вут ӑшне пӑрахрӗ чӑрсӑр чӗрене.
Хӗп-хӗрлӗ чӗре пек пӗчӗк медальон —
Çулӑмри чӗрӳйӗн ӗлки пур-тӑр ун?..
Эп ӑнлантӑм, тусӑм, пӗр сӑмахсӑрах...
Сан чӗрӳ те халӗ вутлӑ çулӑмрах.

Аллӑмра парнӳ сан — пӗчӗк медальон,
Кӑкӑр умӗнче вӑл çӳрӗ кашни кун.

## ПАЯНХИ ЮРАТАКАН МОНОЛОГĔ

Мана Хĕрлĕ кĕнекене кĕртĕр.
Ассăрла юратакансен йăхĕнчи
юлашки — эпĕ.
Халĕ ăспа «юратаççĕ»,
машинăшăн тухаççĕ качча,
чаплă хваттершĕн,
пысăк шалушăн.
Эп — ниме шанмасăр,
ним те кĕтмесĕр,
çуккине — пур туса,
пуррине — çук туса
савакан.
Çăлтăр çутинчен вĕрен явса,
Уйăх сăмсинчен чуччу çакса,
Тĕнче уçлăхĕнче
савни ĕмĕлкипе
сикетĕп чуччу.
Мана Хĕрлĕ кĕнекене кĕртĕр.

* * *

Астăватăп, эп лараттăм
Вахш-шыв хĕрринче.
Ĕмĕт-керменсем пуратăм
Шухăшăмсенче.
«Сик!» — çак самантра янрарĕ
Приказ пек пĕр сас.
(Шăрăхпа-и пуç анрарĕ?)
Сикрĕм. Мĕн тăвас?..
Самантрах Вахш ыталарĕ
Ырнă ÿтĕме.
Урнă хумĕ муталарĕ,
Илесле чĕме.
Çыранра мĕлтлетрĕç юлчĕç
Шÿтçĕ сăвăçсем.
Ашаксем салхун пуç сулчĕç:
— Пит начар ĕççем...
Ыткăнса юхать Вахш хумĕ,
Пĕтĕрнет, сикет,
Пахча умĕн, чакăл çумĕн
Çăтмаха тĕкет.
Сывă пул, аттем-аннеçĕм,
Упăшкам, сыв пул!
Пĕчĕк хĕрĕм-пуканеçĕм,
Пысăк пул, сыв пул.
Сывă пул, тăван-пĕтенĕм,
Халăхăм, сыв пул.
Вахш ытамĕнче пĕтетĕп...
Ĕмĕтĕм, сыв пул...
Ĕнтĕ эпĕ сывпуллашрăм
Çутă тĕнчепе.
Ĕнтĕ эпĕ кĕç паллашăп
Лешĕ тĕнчепе.
...Пенĕ евĕр хирлÿ-ухă,
Йĕппине-мана

Ывтăнтарчĕ вирлĕ юхăм
Чуллă çырана.

Сикрĕм тăтăм чĕрĕ, сывă.
Эп курмарăм хур...
...Халĕ акă пур ман ывăл,
Ятăм-шывăм пур.

Шухăша путса ларатăп
Вуник çул иртсен.
Тĕлĕнетĕп те аптратăп:
Вилĕм аллинчен
Мĕнле вăй-ши туртса илчĕ
Ун чухне мана?
Мĕн пирки мана Вăл çăлчĕ?..
Çăлчĕ ман чуна?..
Тĕкрĕ миçе хут шăпаçăм
Тĕпсĕр авăра...
Кашнинчех çав Вăй-асамçă
Маншăн тавăрать...
Ĕçĕм-хĕлĕм вĕçленмен-тĕр
Ман çак çĕр çинче...
Ĕмĕт-шухăшăм хĕмлентĕр
Пурнăç çырĕнче...
...Эп ăнлантăм. Эп ăнлантăм
Çав Хăват мĕнне.
Эп ăнкартăм, эп ăнкартăм
Мĕншĕн çăлнине.
Турăсен турри — чăн Турă —
ЮРАТУ ТУРРИ.
Маншăн çуккă турă урăх —
Эпĕ — ун чури.
Çĕклĕп сан чапна — тĕв турăм,—
Юрату турри!
Юрă хыççăн хывăп юрă —
Юрату юрри!

# ТУПМАЛЛИ

## ТЕЛЕЙ СУНАТАП


Телей сунатăп . . . . . . . . 6
«Юхать-и юханшыв шăнкăртатса» . . . . 7
«...Тăван çĕршывăм, Чăвашстан...» . . . . 8
Чăвашăн ыр йăла нумай . . . . . . 9
«Пĕччен, хир урлă, тӳремрен...» . . . . 10
«Хĕр куççулĕ пекех типрĕ сывлăм...» . . . . 11
Тăван кил . . . . . . . —
Çураки . . . . . . . . 12
«Çын вăл — çынах...» . . . . . 13
«Ирсерен çӳретĕп вăрманта...» . . . . 14
Ырă сăмах . . . . . . . . 15
Тивĕç . . . . . . . . 16
Манăн ăру . . . . . . . 18
Анюк аппа . . . . . . . 19
«Нишлĕ чуншăн пурнăç — ăшăх кӳлĕ...» . . . 20
Хĕрарăм . . . . . . . . 21
Пурăнăç . . . . . . . . 22
Ырăпа усал . . . . . . . 23
Антăлу кĕвви . . . . . . . 26
«Хĕвел тухать!..» . . . . . . . 27
Ылтăн алă . . . . . . . 28
Шуланкăш . . . . . . . 29
Шыв . . . . . . . . . 30
Сивчир . . . . . . . . 31
«Улма-çырла ларать сĕтел çинче...» . . . . 33
«Юлташăм калать...» . . . . . . 34
Çĕлен . . . . . . . . . 35
Шĕкĕ . . . . . . . . . 36
Юр çăвать . . . . . . . 37
«Балкон çинче эп...» . . . . . . 40
«Вĕлтĕртетсе ташлать шур юр...» . . . . 41
«Чулпа перене...» . . . . . . 42
«Аçта, ăçта çав савăк хĕрача?..» . . . . 43
«Тăвас тенине — тăваймарăм...» . . . . —
Вăрман, вăрман... . . . . . . 44

«Савăнар...» . . . . . . . . 45
«Çилçунатсем — çулсем...» . . . . . 46
«Хуллен уçăлать чаршав...» . . . . . 47
Нелли Смородиновăна . . . . . . 48
«Хăш-пĕрисем танккаççĕ хупаха...» . . . . 49
Амăшĕ . . . . . . . . 50
Чăваш театрне . . . . . . . 51
«Парнелĕр чечексем артистсене...» . . . . 52
Ефим Никитина . . . . . . . 53
«Қилсем, килсем, хавхалану саманчĕ!» . . . 54
«Эп пурăнатăп тăххăрмĕш хутра...» . . . . 55
Пил . . . . . . . . . . 56
«Çутçанталăкпа пĕрле кулатăп...» . . . . —
«Поэт туссем — хĕвел чунсем!..» . . . . 57
«Қаллех тухатăп эп уя-хире...» . . . . —
«Поэтăн хăй тĕнчи пур тĕнчере...» . . . . —
Митта Ваçлейĕн вилтăпри çинче . . . . 58
Хусанкая . . . . . . . . 59
Станислав Репьяха . . . . . . . 60
Эс ташламах çуралнă . . . . . . 61
«Поэтсем вилсессĕн те вилмеççĕ...» . . . . 62
Владимир Романова . . . . . . . 63
Мария Волковăна . . . . . . . 64
«Миçе хутчен хыпса илсе хĕмлентĕн...» . . . 65
«Утрăм-утрăм...» . . . . . . . —
Сăввăма . . . . . . . . . 66
«Сăвăпа мана çыхнă шăпа...» . . . . . 67
Поэт чĕри . . . . . . . . 68
«Санран сăвăç тăватăпах...» . . . . . —
Кĕтни . . . . . . . . . 70
Сăпка юрри . . . . . . . . 71
«Çичĕ тинĕс тĕпне анма...» . . . . . 72
«Хĕм — поэзин анлă хирĕнче...» . . . . —
«Чикан евĕр эсĕ хуп-хура...» . . . . . 73
Ачамсене . . . . . . . . —
«Ывăлăм, сана курсассăнах...» . . . . . 74
«Ывăлăма...» . . . . . . . . 75
«Қурсамăр, курăр, тусăмсем...» . . . . 76
«Поэт чунĕ — ирĕклĕ чĕкеç...» . . . . 77
Ан пултăр вăрçă! . . . . . . . 78
«Қаççерен...» . . . . . . . . —
Аннем . . . . . . . . . 80
«Аннем, ывăнтăм эп сансăр...» . . . . 81
«Ним туса ĕлкĕрме çук кун каçипе...» . . . 84
Иртнĕ каç...» . . . . . . . . 85

Аннене . . . . . . . . 86
Сирень турачĕ . . . . . . . 87
«Сикрĕ тухрĕ шапа шывран...» . . . . . 88
Пуш уйăхĕ . . . . . . . . 89
Çу . . . . . . . . 90
Йӳç улма хуйхипе ĕмĕчĕ . . . . . 91
«Каç çырмари тĕтререн...» . . . . . 92
Чечек . . . . . . . 93
«Çуртăм çумĕнче...» . . . . . . 95
Çуллахи ӳкерчĕк . . . . . . 96
Хыр . . . . . . . . —
Шанчăк . . . . . . . 97
Ӳкерчĕк . . . . . . . —
«Пас тытнăран...» . . . . . . —
Хырлăх . . . . . . . 98

## ЮРАТУПА КУРАЙМАНЛАХ — ПЕРТАВАНСЕМ

«Ку çуркунне каллех сан ятупа...» . . . . 100
«Кĕтменччĕ, пĕлменччĕ...» . . . . . —
«Вилчĕ... тесех шутланăччĕ эп...» . . . . . 101
Таврăну . . . . . . . . 102
«Аçта, хăш тĕнчере...» . . . . . . . 103
«Савни, çĕнĕрен йăлт пуçлар...» . . . . . 104
«Манăн пин алă пулнă пулсассăн...» . . . . 105
«Мĕн пулчĕ-ши?..» . . . . . . —
«Уçă çил кантăкран...» . . . . . . 106
«Эс ман çине пăхнă чух...» . . . . . 107
«Çилеес чухне...» . . . . . . . 108
Диагноз . . . . . . . . 109
«Хăратăп эп...» . . . . . . . 110
«— Эс каллех çухатнă алсуна...» . . . . 111
«Кĕтнĕ чух — килмерĕн...» . . . . . —
Хирти сукмак . . . . . . . 112
«Манăн пĕтĕм хурлăхшăн, асапшăн...» . . . 113
«Эс — манăн Çăлăнăç утравĕ...» . . . . . 114
«Малашне урасăр та...» . . . . . . 115
«Тĕлпулуран тĕлпулуччен...» . . . . . 116
«Эпĕ хамăн куçăма...» . . . . . . 117
«Юрату — телей вăл тетчĕç...» . . . . . 118
«Çунса, асапланса кĕтни...» . . . . . 119
«Ăн шутла мана саврĕ тесе...» . . . . . —
«Тытатăп та... сана манатăп, акă...» . . . . 120
«Сана эп: «Çут хĕвелĕм!» — тенĕрен...» . . . —

«Кантăкран сăрхăнать кăвак çутă...» . . . 121
Чул чечек . . . 122
Уйăхпи . . . 123
Вĕреçĕлен . . . 124
Тӳпери хĕвелĕм çухалсан...» . . . 125
«Чунăм ыратăвĕнчен...» . . . 126
«Вăхăт — тухтăр,— теççĕ...» . . . 127
«Çĕрле...» . . . 128
«Юратупа нихçан та эпĕ выляман...» . . . 129
Сана саваттăм . . . 130
Сивĕнӳ . . . 131
Юрату . . . 132
«Турăм сар сăпка...» . . . 133
«Эп пĕлсеччĕ...» . . . —
«Çитмĕл те çичĕ тинĕс леш енче...» . . . 134
«Хĕçпе эп çӳретĕп...» . . . 135
«Юлашки тумлам — бомба евĕр!..» . . . 136
«Мĕнле илемлĕ те ĕлккен...» . . . —
«Аллăма кăранташ тыттарсан...» . . . 137
«Телейлĕн юратма пĕлместĕп...» . . . —
«Кăвар çинче ташлатăп...» . . . 138
«...Пат... пат... пат...» . . . 139
Санпа эпир . . . 140
«Эс епле — эп те çаплах...» . . . 141
«Мĕн пирки тĕксĕмленчĕ сасартăк тĕнче?..» . 142
— «Пĕр тумлам çеç парсам...» . . . 143
«...Ярса пусрăм...» . . . 144
«О, мăнаç арçыннăм!..» . . . 145
«Санран мĕнле каяс-ши уйрăлса?..» . . . 146
«Çапла, эп — ăсран тайăлнăскер...» . . . 147
«...Шевлерен кермен эп купаларăм!..» . . . 149
«О, хаклă çыннăм!..» . . . 150
«Ма ӳпкелен...» . . . 151
«Кĕрен куçлăх тăхăнманччĕ...» . . . —
Палăк . . . 152
«Чунсăрри чунсăррине хăртать...» . . . —
«Шухăшпа — сăнчăрпа...» . . . 153
«Вилетĕп эп...» . . . 154
«Парăр мана çунатăма!..» . . . 155
«Ман ĕмĕт тӳпине...» . . . 156
Сана манас тесе... . . . 157
«Эп сансăр пурăнма вĕрентĕм...» . . . 158
«Тĕппипех ĕçрĕм...» . . . 159
«Чăлт-чалт хĕм сапатчĕ чун-вутчуль...» . . . 160
«Эс ăсма пĕлменшĕн...» . . . 161

«Юрату çуралман-ха...» . . . . . . —
«Путакан улăм пĕрчинчен...» . . . . 162
«Çак пĕчĕк планета çинче...» . . . . . —
«Кĕркуннерен тŭрех пуçланчĕ çур...» . . . 163
«Тĕлĕнеççĕ аптраса синоптиксем...» . . . . 164
«Эс алă султăн, султăн, султăн...» . . . . —
«...Вăрлаççĕ, вăрлаççĕ...» . . . . . . 165
«Măйлатаççĕ, нăйлатаççĕ...» . . . . . 166
«Аллăмра парнŭ сан — пĕчĕк медальон...» . . 167
Паянхи юратакан монологĕ . . . . . 168
«Астăватăп, эп лараттăм...» . . . . . . 169

Раиса Васильевна САРБИ

ÇĂЛТĂР ÇУМĂРĔ
ЗВЕЗДОПАД

Стихи

На чувашском языке

Редактор В. О. Максимов
Художник В. П. Петров (Праски Витти)
Художественный редактор М. Д. Давлятшин
Технический редактор Н. В. Васильева
Корректор Н. П. Печникова

ИБ 2625

Сдано в набор 14.10.91. Подписано к печати 12.02.92. Формат 70×90[1]/32. Бумага общего назначения. Гарнитура литературная. Печать высокая. Усл. печ. л. 6,43. Усл. кр.-отт. 6,72. Учетно-изд. л. 5,46. Тираж 4000 экз. Заказ № 2209. Изд. № 26. «С» 8.

Чувашское книжное издательство.
428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4.
Типография № 1 Государственного комитета
Чувашской ССР по делам издательств,
полиграфии и книжной торговли.
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.

428019, Чебоксарская тип. № 1
ЧАССР, г. Чебоксары,
Канашское шоссе, 15

Контролер № 4.

При обнаружении дефекта в книге
просим возвратить книгу вместе
с этим ярлыком.

Зак. 3838.

3-20



РАИСА САРБИ

ЧĂВАШ КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ